чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

163/26569/ № Кĕçнерни кун, 2014, çурла (август), 21 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Раççей министрне тав тунă

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей оборона министрне Сергей Шойгуна Раççей Сывлăш-çар вăйĕсен «Стрижсен» пилотаж ушкăнĕн Шупашкар кунĕнчи манăçми кăтартăвĕшĕн тав тунă.

«Шупашкар хула кунĕнче питĕ ăста летчиксен авиашоуне 300 пин ытла çын пысăк кăмăлпа сăнанă. Унсăр пуçне Чăваш Енре пурăнакан 7 пин ача ятарласа йĕркеленĕ экскурсисем вăхăтĕнче пилотаж ушкăнĕн членĕсемпе курнăçма, мухтавлă «МиГ»-сене сывлăшра кăна мар, çĕр çинче те курма пултарнă.

Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентесси тата çар-патриот воспитанийĕн теми паянхи Раççейшĕн те, Чăваш Еншĕн те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Эпир тăван тăрăха-çĕре, ашшĕ-амăшĕпе сывăх çыннисене хисеплеме, юратса пурăнма хăнăхтаратпăр, чыс, тивĕç туйăмне вăрататпăр. Çакă пĕтĕмпех Раççей патшалăхĕн оборона хăватне ўстерме пулăшать. Пирĕн арçын ачасемпе хĕр ачасем Раççейĕн чи маттур летчикĕсен вĕçевне курса тўпе çинчен, вĕçевçĕ пулма ĕмĕтленме тытăнасса шанатăп, вĕсем çĕр-шыв хўтĕлевçисен ретне çирĕп кăмăл-туйăмпа тăрĕç», – тенĕ телеграммăра.

Ю.ПЕТРОВ.

Аварире краççын цистерни тўннĕ

Çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче Шупашкарти Соляново чукун çул переездĕнче авари пулнă: тавар турттаракан пуйăспа КамАЗ автомобиль çапăннă. Малтанхи тĕпчев аваришĕн КамАЗ водителĕ айăплине кăтартса панă, вăл семафорăн хĕрлĕ çутине «асăрхаман» иккен, переезд çине кĕрсе кайнă. Йывăр аманнă водителе больницăна ăсатнă, унăн пурнăçĕшĕн хăрушлăх çук.

Аварире краççын тултарнă цистерна тўннĕ. Çав кун Мускавра пулнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăн граждан оборонин тата чрезвычайлă лару-тăрăвăн патшалăх комитечĕн пуçлăхĕпе Вениамин Петровпа телефонпа тўрех çыхăннă, кĕске вăхăтрах авари сиенне пĕтерме хушнă.

Авари вырăнĕнче ятарлă техника ĕçлеме тытăннă. Кăнтăрла иртсен, 16 сехет çурăра, чрезвычайлă лару-тăру хăрушлăхне сирнĕ. Тўннĕ цистернăна кустăрмисем çине вырнаçтарнă, краççына пушатнă.

А.СТЕПНОВ.

Кашни тĕл пулу – пĕлтерĕшлĕ

Ĕнер республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев муниципалитет районĕсене, хула округĕсене тăтăшах тухса çўрет. Производство коллективĕпе, вырăнти халăхпа тĕл пулса калаçать. Кашниех пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем тĕрлĕ ыйтăва татса пама пулăшаççĕ.

Ĕнер Пĕрлехи информаци кунĕнче Михаил Васильевич тĕп хуламăрти икĕ объекта çитсе курчĕ.

«Çĕр лаптăкне ан хĕрхенĕр»

Малтан вăл «Шупашкарти «Энергия» вĕренў-производство предприятийĕ» тулли мар яваплă обществăна çитрĕ. Цехсем тăрăх çўресе ырă-сывă рабочисемпе пĕрлех сусăрсен ĕç вырăнĕсемпе, вĕсем хатĕрлекен таварпа паллашрĕ.

Кăнтăр поселокĕнче вырнаçнă предприятие 1962 çулхи кăрлачра куç курманнисене укçа ĕçлесе илме майсем туса парас тĕллевпе хута янă. Вĕсем çемьеллĕ. Пысăках мар пенсипе çеç ачасене ура çине епле тăратăн? Пушă вăхăтра канăва тĕллевлĕ, усăллă ирттерме культура çурчĕ туса панă, ятарлă библиотека уçнă.

52 çул хушшинче кунти çурт-йĕре юсаманпа пĕрех. Çумăр çусан шыв анать, никĕс тĕпренет. Оборудовани кивелсе çитнĕ. Федераци, республика хыснисенчен укçа пĕр-пĕр тĕллевпе куçать-ха, анчах вăл çителĕксĕр. Производствăна модернизацилеме, çурт-йĕре юсама нухрат çитмест.

Йывăрлăх тупăнсах тăнăран темиçе çул каялла культура çуртне хула балансне куçарнă. Шупашкарăн пурлăх управленийĕн комитечĕ общежитие те хăйĕн çине илес шухăшлă. «Энергия» предприяти документсем хатĕрлесе парасса кĕтет.

Кунта 84 çын ĕçлет, 49-шĕ /58%/ – инвалид, вĕсенчен 36-шĕ /73%/ куç курманнисем. Уйăхри вăтам ĕç укçи – 8020 тенкĕ, сусăррисем эрнере 4 кун вăй хунăран тата ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕкрен вăл сахалрах – 5410.

Рабочисем – электроприбора розеткăпа çыхăнтармалли хатĕрсем, электротиверткĕчсем, куçсăррисем электромашина, аппаратсем пухаççĕ. Пĕтĕмпех алăпа пурнăçланăран ĕç тухăçлăхĕ чăнласах пĕчĕк. Продукци конкурентлăхĕ те çивĕч, çавна пулах кăçалхи пĕрремĕш çур çулта рынокри суту-илў тупăшлăхĕ 0,3% çеç пулнă. Тупăш, тĕпрен илсен, пушă пўлĕмсене арендăна панăран кĕрет.

Предприяти территорийĕ самаях пысăк, анчах питĕ тирпейсĕр. Вĕрене, йывăçтĕм çĕнĕрен шăтнăран тĕллипаллисĕр çитĕнет. Вĕсене пулах пур-çук илем çухалать. Тирпейлĕх-хăтлăх пулмаллах ĕнтĕ. Ку ĕçе, паллах, куç курманнисем хăйсем тĕллĕнех пурнăçлаймĕç, анчах тулли мар яваплă обществăра сывă çынсем те пур-çке. «Йĕрке тума вĕсене мĕншĕн явăçтарас мар?« – тет республика Пуçлăхĕ.

«Энергия» коммерци предприятийĕ шутланнăран патшалăх вĕçĕмрен пулăшаймĕ. Çавăнпа финанс ыйтăвне вырăнта та татса пама тăрăшмалла.

– Сирĕн территорире вырăн сутмалăх та пур. Çĕр лаптăкне ан хĕрхенĕр. Хулара вăл калама çук хаклă, – сĕнў пачĕ Михаил Игнатьев. Вячеслав Васильев гендиректор тўрех нимех те хуравлаймарĕ. Йышпа канашласа тĕрĕс пĕтĕмлетў тăвасса шанас килет.

«Мегафон» республика бюджетне тĕревлĕ

«Мегафон» компани Чăваш Енри халăха 2004 çулхи çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа кĕсье телефонĕпе çыхăнма пулăшать. 10 çул хушшинче унпа усă кураканcен йышĕ 633 пине çитнĕ.

Михаил Васильевич иккĕмĕш объекта «Мегафон» компание суйласа илчĕ, офиспа паллашнă май унăн ĕçченĕсене 10 çулхи юбилейпе саламларĕ. Олег Пискунов директора çак çулсенче пĕр млрд ытла тенкĕлĕх инвестиципе ĕçе кĕртнĕшĕн, Чăваш Ен бюджетне тĕревлеме пулăшнăшăн, пирĕн республикăна суйласа илнĕшĕн тав турĕ.

Зала пухăннисем Михаил Игнатьева чылай ыйту пачĕç. Вĕсене энергетика комплексĕн малашлăхĕ те, республика Пуçлăхĕ РФ Президенчĕпе Владимир Путинпа тĕл пулура ытларах мĕн çинчен каласни те, Пăр керменĕ хăçан хута каясси те, ытти те кăсăклантарчĕ. М.Игнатьев пурне те туллин хуравларĕ.

«Стрижсем» татах вĕçсе килĕç

Пĕрлехи информаци кунĕн иккĕмĕш пайĕ Шупашкарти ача-пăча пултарулăх керменĕнче малалла иртрĕ. Тĕп каласу Шупашкар 545 çул тултарнине палăртни епле иртни, унта халăх йышлă хутшăнни пирки пычĕ.

– Уява пула кăмăл-туйăм хавхаланса çĕкленни паян та иртмен-ха. Питрен ăшă кулă нихăçан та ан çухалтăр. Палăртма кăмăллă: тĕллев йăлтах пурнăçланчĕ. Тĕп хуламăр вырсарни кун асамлăхпа илемлĕх тĕнчинче пурăнса курчĕ. Çакна тўперен сăнанă летчиксем те çирĕплетрĕç. «Стрижсем» вĕçсе килни, ăсталăхĕпе тĕлĕнтерни çеç мĕне тăрать! Нумай çĕрте пулса курнă вĕсем. Чăваш Енĕн тĕп хулине вара пуринчен те ытларах мĕн çинчен каласа, Пăр керменĕ хăçан хута каясси те, ытти те кăсăклантарчĕ. М.Игнатьев пурне те туллин хуравларĕ. Çыхăну вĕсемпе малашне те татăлмĕ. Чĕнсен татах вĕçсе килĕç.

Хулана мероприяти хыççăн пĕр каçрах тирпей-илем кĕртме ĕлкĕрни те савăнтарчĕ, – кăмăлтан каласрĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. – Республикăра кашни виççĕмĕш çын спортпа туслă. Юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума ирттерме Шупашкара суйласа илни ăнсăртран мар. 2015, 2016, 2018 çулсенче те пирĕн патăмăрта пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăртусем ирттерме палăртнă. Сочири Олимпиадăра: «Пĕр команда – пĕр Раççей», – теттĕмĕр. Хальхинче хăюллăнах: «Пĕр команда – пĕр Чăваш Ен», – теме пултаратпăр.

Юлашкинчен производствăра хастарлăх кăтартнисене, тĕп хула уявĕнче уйрăмах палăрнисене Чăваш Республикин, Шупашкар хулин тата администрацийĕн наградисемпе чысларĕç.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ.**

Дмитрий БАРЫШОВ сăн ўкерчĕкĕ

Ыран – Патшалăх ялавĕн кунĕ

Кашни çĕр-шывăн патшалăх палли пур. Унăн суверенитечĕн тĕп символĕсем – герб, ялав, гимн. 1993 çулта Раççей Президенчĕ хăйĕн указĕпе шурă-кăвак-хĕрлĕ тĕслĕ ялава патшалăх символĕсен шутне кĕртнĕ. 1994 çулхи çурла уйăхĕнче йышăннă указра çапла çырнă: «1991 çулхи çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнче Раççейĕн виçĕ тĕслĕ ялавне тавăрнă май Раççей Федерацийĕн тепĕр уявне – Раççей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунне çирĕплететĕп, ăна çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнче уявлама йышăнатăп».

2000 çулхи раштавăн 20-мĕшĕнче федерацин «Раççей Федерацийĕн патшалăх ялавĕ çинчен» Конституци саккунĕ вăя кĕнĕ. Унпа килĕшўллĕн Патшалăх ялавĕ Раççей патшалăхĕн символĕ шутланать. Саламлатпăр!

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

Цюрихран – виçĕ медальпе

Швейцарири Цюрих хулинче çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионачĕ вĕçленнĕ. Аса илтеретпĕр: унта Раççейĕн пĕрлештернĕ команди йышĕнче Чăваш Енĕн 6 спортсменĕ тупăшнă. Елена Наговицина, Анжелика Сидорова, Вера Соколова, Александр Яргунькин, Наталья Пучкова тата Альбина Майорова.

Пирĕн атлетсем асăннă чемпионатра ăнăçлă ăмăртнă. Анжелика Сидорова çўллĕшне шăчăпа сиксе ылтăн медале тивĕçнĕ. Наталья Пучковăпа Альбина Егорова командăри тусĕсемпе Гульнара Выговскаяпа тата Надежда Леонтьевăпа пĕрле марафонăн команда ăмăртăвĕнче бронза медаль çĕнсе илнĕ. Сăмах май, Наталья Пучкова Раççей спортсменкисен йышĕнче чи лайăх кăтартупа палăрнă. Дистанцие вăл 2 сехет те 32 минут та 22 çеккунтра вĕçленĕ. Финиша 11-мĕш чупса çитнĕ. Олимп вăйăисене икĕ хутчен хутшăннă Альбина Майорова вара 17-мĕш. Раççей команди Цюрихра пурĕ 22 медаль çĕнсе илсе тăваттăмĕш вырăна тухнă. Малта – Аслă Британи, Франци, Германи спортсменĕсем.

Р.ВАСИЛЬЕВА.

Ĕçтешсен киоскĕнче «Хыпар» та пулĕ

Шупашкарти «Модăсен çурчĕ» умĕнче «Советская Чувашия» хаçатăн мини-маркетне савăнăçлă лару-тăрура уçнă. Ку вырăна ахальтен суйламан: хула варри, халăх йышлă çўрет, троллейбуспа автобус чарăнать.

Кондиционерлă, Интернет çыхăнуллă, Раççей Федерацийĕнче тата регионта пичетленекен йышлă кăларăм сутакан çĕнĕ павильонпа ЧР информполитикин тата финанс министрĕсем Валентина Андреевăпа Светлана Енилина, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков, хаçат вулакансем паллашнă. Асăннă павильонта хаçат туянма, ăна йўнĕрех хакпа çырăнса илме, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пулăшăвĕсемшĕн тўлеме, карас телефонĕ çине укçа куçарттарма, ксерокопи тума, кофе ĕçме те пулать. Çав вăхăтрах тавар туяннăшăн банк карточки урлă та тўлеме май пур. Ку павильон ытти киоскран пысăкрах калăпăшлă пулнипе уйрăлса тăрать. Кунта 1000 тĕрлĕ хаçат-журналпа 300 яхăн кĕнеке вырнаçать. Сăмах май, ĕçтешсен киоскĕнче «Хыпар» та пулĕ. Модăсен çурчĕ патĕнчи мини-маркетра пĕрремĕш пулнисем тўлевсĕр кофе ĕçнĕ, «Советская Чувашия» хаçата йўнĕрех хакпа çырăннă.

Р.ГРОМОВА.

Пир çинче – Ильинка илемĕ

Чăваш художникĕсен союзĕ Хула кунĕ тĕлне çулленех «Шупашкарăм, савнă Шупашкар» курав ирттерет.

Кăçалхи выставка хыççăнах ўнерçĕсем Муркаш районне çул тытрĕç. Çурла уйăхĕн 20-23-мĕшĕсенче Ильинка салинче йăлана кĕнĕ пленэр иртĕ. Йышра – Н.Карачарсков, А.Головинский, В.Яковлев, Н.Федотов, В.Камалетдинов, Н.Лукиянов. Çак тапхăрта вĕсем «Ильинский» кану çуртĕнче пурăнĕç, вăхăта уçă сывлăшра Ильинка сали çывăхĕнчи илеме пир çине куçарса ирттерĕç.

Пленэрта пурнăçланă ĕçсемпе кунтах тата Муркашра, Шупашкарта паллаштарма тĕв тытнă.

Н.ГЕОРГИЕВА.

Пан улмипе вулавăша мĕн çыхăнтарать?

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç ялĕнчи тĕслĕх вулавăшра интереслĕ мероприяти куллен йĕркелеççĕ. Çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче вĕсем «Манăн сад» уяв ирттернĕ. Ăна Пан улми сăпасне халалланă.

Праçнике ялти пахчаçăсем хăйсем ўстернĕ улма-çырлапа пынă. Пухăннисем пан улмин тĕрлĕ сортне, пан улми кукăльне ас тивн�с. Виталий Никишин вара улмуççие сыпма вĕрентнĕ, сад-пахчари ĕçсен вăрттăнлăхне уçса панă. Виталий Никитич тĕрлĕ йышши чечек, çырла ўстерет. Пушă вăхăтра ялти «Ăру» халăх театрĕпе ачасемпе çамрăксен «Çулташ» театр кружокĕ валли пьесăсем çырать. Никишин ялти яш-кĕрĕмпе хĕр-упраça пулăшса пыракан, çул кăтартакан. Çав кун культура ĕçченĕсем пурне те пан улмипе хăналанă.

Р.ИВАНОВА.

Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕртен 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 25, çĕрле 16 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нўрĕк 47 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 42 минут.

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил кăнтăртан 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 24, çĕрле 18 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нўрĕк 47 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 37 минут.

Форум

Çивĕч ыйтăвăн хуравне пĕрле шырарĕç

Чăваш Республикин ĕç рынокĕ хăш-пĕр специальноçпе «тулса ларнă»: юрист, экономист тата ытти те. Çав вăхăтрах инженерсемпе техника тĕлĕшĕнчен аслă пĕлўллĕ специалистсем çитмеççĕ. Мĕншĕн çапла килсе тухнă-ха?

Аслă шкулсемпе колледжсем, техникумсем паянхи кун ыйтăвне шута илсе ку е вăл специалиста кирлĕ чухлĕ хатĕрлеççĕ пек-çке. Çĕнĕ технологиллĕ производство аталанса пынă тапхăрта – уйрăмах. Форума асăннă ыйтăвăн хуравне тупас тĕллевпе «Раççей» халăх фрончĕ» общество юхăмĕн пирĕн республикăри уйрăмĕ йĕркеленĕ. Ятарлă вăтам тата аслă вĕренў заведенийĕсен ăсчахĕсемпе преподавателĕсем, ĕç вырăнĕпе тивĕçтерекенсемпе ĕç тăвакан влаç органĕсен представителĕсем инженерсемпе техника кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлессинчи çивĕч ыйтăва пĕрле пухăнса тĕплĕ тишкерчĕç.

Форума уçнă чухне Мускав автомобильпе çул-йĕр институчĕн Шупашкарти филиалĕн директорĕн çумĕ Виталий Михайлов калаçу Владимир Путин хăй вăхăтĕнче Раççей Патшалăх Канашĕн анлă ларăвĕнче каланă «Инженер кадрĕсен пахалăхĕнчен патшалăхăн конкуренци тупăшăвĕн çитĕнĕвĕ килнине, унăн тĕп факторĕ пулнине пирĕн ялан асра тытмалла» каланă сăмахсем тавра пымаллине аса илтерчĕ. Виталий Александрович инженерсемпе техника кадрĕсене хатĕрлеме чăрмантаракан тата хатĕрлевĕн пахалăхне чакаракан енсене пайăрăн асăнчĕ: вĕсем – практикăпа теори çыхăнăвĕ татăлни, вăхăт иртнипе ăсталăха çухатса пыракан специалиста производствăра тепĕр хут вĕрентсе тăкаклани, малашлăхĕ пысăк абитуриентсем урăх региона пĕлў илсен çуралнă тăрăха таврăнманни тата ытти те. Малалла сăмах çаксем тавра пычĕ.

Чăваш Республикин вĕренў тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов хăй ертсе пыракан ведомство республикăри хальхи технологиллĕ предприятисене тивĕçтерме квалификациллĕ специалистсем мĕнле хатĕрленипе тĕплĕ паллаштарнă хыççăн Владимир Николаевичăн вунă ытла ыйтăва хуравлама тиврĕ. Çакă хăех асăннă ыйту çивĕччисен йышĕнче пулнине çирĕплетет. Паллах, чылайăшне федераци шайĕнче татса памалла, çав вăхăтрах хамăрăн та алă усса ларма юрамасть: шкул саккинченех техника туртăмĕллĕ ачасенчен квалификациллĕ специалист хатĕрлеме тытăнмалла – тĕрлĕ кружок йĕркелемелле, кăсăклантармалла, хавхалантармалла, пулăшмалла. Кружок йĕркелесси, ертсе пырасси, ăна хальхи оборудованипе, детальсемпе тивĕçтересси – тăкаклă. «Шухăшласассăн, паянхи кун йĕркинчи пур ыйту та укçа-тенкĕпе çыхăннă. Анчах производство малашлăхра аталанса пытăр тесен пирĕн ăна шеллеме кирлĕ мар. Унсăрăн каярахпа эпир ытларах та çухатма, тăкакланма пултаратпăр», – терĕ Чăваш Республикин Общество палатин информаци политикин тата культура, вĕренў, этноконфессисен хутшăнăвĕсен комиссийĕн ертўçи, Шупашкарти электромеханика колледжĕн директорĕ Алексей Судленков. Колледжра вĕренме кăмăл тăвакансен шучĕ çулсерен ўссе пырать. Кăçал та пĕр вырăншăн 7 абитуриент тупăшнă. Ара, кунта паянхи производствăра питĕ кирлĕ специалистсем хатĕрлеççĕ-çке. Вĕренсе тухакансем пурте тенĕ пекех Шупашкарти тĕрлĕ предприятире, çавăн пекех «ЭКРА», «ЭЛАРА» пĕрлешўсенче те, тивĕçлĕ шалуллă ĕçсене вырнаçаççĕ.

Пысăк пĕлўллĕ тата квалификациллĕ специалиста пур çĕрте те хапăл. Анчах чылайăшĕн пĕлў шайĕ тивĕçтермест, теприн пултарулăхĕ пĕчĕкрех, виççĕмĕшĕн шухăшлавĕăнланăвĕ ансăртарах, тăваттăмĕшĕн... Çапла ан пултăр тесен мĕн тумаллаха, ĕçпе практикăна мĕнле çыхăнтармалла, йывăрлăхран мĕнле тухмалла? Чылайăшне канăççăрлантаракан ыйтусене уçăмлатма республикăри Суту-илў тата промышленноç палатин вице-президенчĕ, общество юхăмĕн уйрăмĕн «Уçăмлă тата тупăшлă экономика» ĕç ушкăнĕн ертўçи Анатолий Князев, «Трактор завочĕсем» концернăн корпоративлă вĕренĕвне аталантарас тĕлĕшпе ĕçлекен ушкăн ертўçи Евгений Максимов пулăшрĕç.

Мĕн пытармалли: промышленноçпа вĕренў учреждениийĕ професси пĕлĕвĕ парса ăста специалист хатĕрлессинче пĕрле килĕштерсе ĕçлеме тытăнман-ха. Пĕр çулпа утма тытăнсассăн лару-тăру лайăхланмалла та. Паянхи кун вăл лайăх енне улшăма тытăннă, анчах хальлĕхе вĕсен хушшинче килĕшў çав-çавах çук-ха. Килĕштерсе ĕçлессин çул-йĕрĕнчен пăрăнсассăн ўсĕм пулмĕ. Çав вăхăтрах пĕчĕк тата вăтам бизнес çинчен те манмалла мар. Ытти сферăра та çамрăк специалистсем çитмеççĕ. Аслăрах ўсĕмрисем пенси çулне сулăннă, вĕсем хăйсен ăсталăхне вĕрентсе хăварма никам çуккишĕн пăшăрханаççĕ.

Икĕ регион вăй-хăвата пĕрлештерсе хăйсем валли кадрсем хатĕрлесси çинчен те сăмах пулчĕ форумра. Мари Эл патшалăх технологи университечĕн профессорĕн Игорь Петуховăн сĕнĕвĕ ыттисене те килĕшрĕ. Шухăша И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн машиностроени факультечĕн деканĕ Виктор Гартфельдер тарăнлатрĕ. Вăл форумăн ятарлă резолюцийĕнче те вырăн тупрĕ.

Тухса каласакансем асăннă ыйтупа форума йĕркелекенсене тав турĕç. Кун пекки – тĕрлĕ эксперт пĕр лапамра пухăнса пĕр шухăш-тĕллев патне çитни – халĕччен пулманччĕ. Раççей халăх фрончĕн хастарĕсем организаци хăй умне лартнă тĕллеве пурнăçларĕç: общество институчĕсемпе патшалăх представителĕсен уçăмлă каласăвне йĕркелерĕç. Хальхи каласăвăн тĕшшине вĕсем Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн юпа уйăхĕн 13-15-мĕшĕсенче Пензăра иртекен анлă ларăвĕн резолюцине кĕртме сĕнĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

Бюджет

Пĕрремĕш çур çул кăтартăвĕсем

Çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче республика Правительстви Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн бюджета пурнăçлани çинчен йышăннине çирĕплетсе влаçăн ĕç тăвакан органĕсен 2014 çулăн пĕрремĕш çурринчи ĕçне пĕтĕмлетрĕ

Тупăшпа тăкак – шайлашуллă

2014 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне консолидаци бюджетне тупăш тĕлĕшпе 21,230 млрд тенкĕлĕх е çулталăкри планпа палăртнин 50,6 проценчĕ чухлĕ пурнăçланă, ку кăтарту иртнĕ çулхи ултă уйăхринчен 4,0 процент ÿснĕ, çав шутра харпăр хăй тупăшĕпе – 13 миллиард та 345,4 млн тенкĕлĕх тата 4,8 процентлăх.

Чăваш Республикин 2014 çулхи пĕрремĕш çур çулхи консолидаци бюджечĕн харпăр хăй тупăшĕн тытăмĕнче налук тÿпи – 87,3, унпа çыхăнманни 12,7 процент шутланнă. Налук шучĕпе 11648,1 млн тенкĕ пырса кĕнĕ е иртнĕ çулхи асăннă тапхăртинчен 2,7 процент ытларах. Çав шутра организацисен тупăшĕн налукĕ – 2516,2 млн /5,5 процент нумайрах/, уйрăм çынсен тупăшĕн налукĕ – 4803,6 млн тенкĕ тата 9,1 процент.

Тавăрса памалла мар пырса кĕнĕ укçа-тенкĕ 7884,6 млн тенкĕ пулнă е пĕлтĕрхи пĕрремĕш çур çулхинчен 2,6 процент ытларах.

Чăваш Республикин консолидаци бюджечĕн тăкакĕсем кăçалхи ултă уйăхра 20 миллиард та 495,4 млн тенке çитнĕ /çулталăк планĕпе палăртнин 43,7 проценчĕ тата пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 10,9 процент нумайрах/.

Патшалăх влаçĕн мĕн пур органĕ пырса кĕнĕ укçапа тухăçлă усă курассишĕн пуçаруллă тăрăшни консолидаци бюджечĕн профицитне чакарма /2014 çулхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 734,6 млн тенкĕ шутланнă/, çапла вара республикăри бюджета тивĕçекенсен умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама май панă. Бюджет укçипе усă курнин шайĕ 96,5 процента çĕкленнĕ, иртнĕ çулхи çав вăхăтра – 90,6 процент.

Тăкаксен пысăк пайĕ вĕренÿпе /36,6 процент, пĕлтĕр – 35,4/, социаллă политикăпа /17,5, пĕлтĕр – 20,4/, наци экономикипе /14,0 процент, пĕлтĕр – 13,0/, сывлăх сыхлавĕпе /15,7 процент, пĕлтĕр – 16,8/ çыхăннă.

Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта **вĕренÿ** тытăмĕ валли 7499,8 млн тенкĕ /2013 çулхи шайăн 114,6 проценчĕ/ уйăрнă. Çав укçапа пĕлÿ çурчĕсене çĕнĕрен тунă /реконструкциленĕ/, вĕсен ĕç-хĕлне тивĕçтернĕ, шкул умĕнхи вĕренÿ учрежденийĕсенче ĕçлекенсен шалăвне ÿстернĕ тата ытти тĕллевпе усă курнă.

2014 çулта пĕчĕккисем валли 2616 вырăнлă 14 учреждени хута яма, пур пек çурт-йĕре тĕпрен юсаса 1060 вырăн йĕркеленме тата 1464 вырăнлă 9 ача садне çĕклеме /реконструкцилеме/ палăртнă.

Кăçалхи ултă уйăхра **социаллă политикăна** аталантармашкăн 3594,2 млн тенкĕ /пĕлтĕрхи шайăн 95,3 проценчĕ/ хывнă. Укçа-тенкĕ социаллă ыйтусене тивĕçтерме, хÿтлĕх пама, социаллă пулăшу мерисем уйăрма, тĕрлĕ пособи тÿлеме, граждансен уйрăм ушкăнне хваттерлĕ тума тăкакланать. Çапла майпа кăçалхи пĕрремĕш çур çулта хваттер условийĕсене лайăхлатмашкăн патшалăх 2600 ытла çемьене пулăшнă.

Асăннă тапхăрта **сывлăх сыхлавне** 3215,9 млн тенкĕ /пĕлтĕрхи шайăн 103,5 проценчĕ/ хывнă: сиплев учрежденийĕсене çĕнĕрен çĕкленĕ, реконструкциленĕ, тĕпрен юсанă, халăха медицина пулăшăвĕ панă, эмел хатĕрĕ, тĕрлĕ препарат туяннă. Кăрлач-çĕртме уйăхĕсенче фельдшерпа акушер пункчĕн 5 çуртне хута янă, тепĕр вун пиллĕкĕшне çурла уйăхĕ вĕçленичченех туса пĕтермелле. Сывлăх сыхлавĕн 8 учрежденине тĕпрен юсаççĕ. Кăçал пĕтĕмпе 43 ФАП уçма палăртнă.

Экономикăн чăн-чăн секторне аталантармашкăн кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 2861,3 млн тенкĕ /пĕлтĕрхи шайăн 119,5 проценчĕ/ янă: ăна çул-йĕр, ял, шыв, вăрман хуçалăхĕсене хывнă. Кăçал 14,2 км çула юсанă, çав шутра ял тăрăхĕсенче – 6,2 км. Ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансенчен 60649-шне /вĕсен шутĕнче организацисемпе хресчен /фермер/ хуçалăхĕсем – 808, харпăр хăй хуçалăхне тытса пыракан 59841 çын/ пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшнă.

Паянхи кун тĕлне Чăваш Республикин экономики ÿсĕм çулĕпе пырать, шалу ÿсет, уйрăм çыннăн бизнесĕ аталанать. Çакна республикăн налук потенциалĕн индексĕ те çирĕплетет: 2006-2009 çулсенче вăл 0,404 пулнă, 2014 çулта малтан палăртнă тăрăх 0,496-та çитмелле. Кунта çакна та шута илмелле: çĕр-шыв экономики пысăк хăвăртлăхпа аталаннă май 2006-2009 çулсем бизнеса вăй илтермешкĕн уйрăмах ăнăçлă шутланнă. Республика регион тата вырăнти шайри бизнеса пулăшма тăрăшать – Чăваш Республикин бюджетне куçармалли налук тĕлĕшпе çăмăллăх парать. 2013 çулта унăн сумми 644,5 млн тенкĕпе танлашнă.

Ĕç ветеранĕсем – сумра

Пирĕн республикăра ĕç ветеранĕсене социаллă хÿтлĕхпе – сăмахран, вĕсене уйăхри укçа тÿлевĕпе тивĕçтерессине – чăннипех хакласçĕ. Халăхи вăхăтра унăн виçи Чăваш Енре 1082 тенкĕпе танлашать, ун çумне тата стационар телефонĕпе усă курнăшăн паракан компенсаци – 220 тенкĕ – хушăнать. Ку тÿлев федерацин Атăлçи округĕн регионĕсен хушшинче пысăккисенчен пĕри шутланать. Танлаштармашкăн: Мари Эл республикинче – 823 тенкĕ, Мордва республикинче – 796, Тутарстанра – 1087, Чул хула облаçĕнче – 1228, Ульяновск облаçĕнче 806 тенкĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнисенчен ĕç ветеранĕн ятне тивĕçнисем йышлă пулнипе те палăрса тăратпăр. Кăçалхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсем 128,2 пин çынна е пенси ÿсĕмĕнчисен 46,4 процентне çитнĕ. Сăмах май, ку кăтарту Тутарстанра – 28, Мордва республикинче – 30,7, Мари Элра 38,8 процент. Чăваш Енре пĕтĕмпе 168,6 пин ĕç ветеранĕ пурăнать.

2013 çулта уйăхри укçа тÿлевĕ валли республика бюджетĕнчен 1 миллиард та 821,6 млн тенкĕ тăкаклана, кăçал çак тĕллевпе 1 миллиард та 964,6 млн тенкĕ палăртнă.

Инвесторсемшĕн илĕртÿллĕ

Чăваш Ен – пур енлĕн аталанса пыракан республика. Пуçарулăхĕпе, пилот проекчĕсене хутшăннипе бизнесшăн илĕртÿллĕ инвестици лапамĕ пулса тăрать. Регион федераци шайĕнчи конкурссене хутшăнать, тĕллевсем палăртать тата экономикăн чăн-чăн секторне пуçаруллă финанслама тăрăшать. 2013 çулта инвестицисене республика 5,458 млрд тенкĕ яма пултарнă тăк, 2014 çулта малтан палăртнă кăтартусем тăрăх – 7 млрд ытла тенкĕ.

Çав вăхăтрах Чăваш Ен «дотаци регионĕ» пулнине никам та хирĕçлемест, республикăра пурăнакансен умĕнчи бюджет обязательствисене пурнăçлама ансат мар, инвестицин пĕлтерĕшлĕ проекчĕсене финансламашкăн кредит организацийĕсенчен пулăшу ыйтма тивет. Çапах та Чăваш Республикин Правительстви «кивçен ил, анчах перекетле» тĕллеве тĕпе хурать. Çавăнпа ĕнтĕ 2014 çулта патшалăх парăмне тивĕçтермелли тăкака 25 млн тенкĕлĕх чакарма палăртнă.

Пĕтĕм тĕнчери ятлă-сумлă агентствăсен кредит рейтингĕсем республика ертÿлĕхĕ ăнтăлуллă ĕçленине хаклакан пĕлтерĕшлĕ кăтартусем пулса тăраççĕ. Кăçалхи çĕртме уйăхĕнче Шупашкарти VII экономика форумĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх, Чăваш Ен – уçă регион тата шанчăклă партнер. Чăн та, çак сăмахсене пĕтĕм тĕнчери паллă агентствăсен – Moody' sInvetorsService тата FitchRatings – пысăк рейтингĕсем те çирĕплетеççĕ.

Палăртмалла: асăннă агентствăсем çакнашкал хаклавсене çулленех ирттереççĕ, юлашки çичĕ çулта вĕсем пирĕн республикăна тăнăçлисен шутне кĕртеççĕ.

Кун пек хаклава тивĕçмешкĕн тата ят-сума темиçе çул çирĕплетсе тăмашкăн Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенчен хăшĕ-пĕри пултараймасть, мĕншĕн тесен кун пек чухне экономикăн уйрăм отраслĕн е инвестици компанийĕсен аталанăвĕн кăтартăвĕсене кăна мар, регионăн социаллă пурнăçĕпе экономикин ÿсĕмĕсене, финанс лару-тăрăвне тата парăм обязательствисене пурнăçланине тĕпе хураççĕ.

Республика влаçĕн ĕçĕ-хĕлне пĕтĕм тĕнчери рейтинг агентствисем панă пысăк хаклавăн пĕлтерĕшĕ тата малашлăхĕ çинчен сăмах вĕççĕн кăна мар, хăйсем те аван пĕлекен специалистсем те татăклăн та витĕмлĕн пĕлтереççĕ паллах.

«Сăмах кунта ятсăр-шывсăр экспертсем пирки пымасть. Проекчĕсене вырнаçтарнă чухне çав агентствăсен специалисчĕсен пĕтĕмлетĕвĕсене финанс инвесторĕсем çеç мар, пысăк корпорацисем те шута илеççĕ. Çавăнпа хăйсен сĕнĕвĕсемшĕн явап тытакан тĕнчери паллă рейтинг агентствисен пĕтĕмлетĕвĕсене тĕпе хурса регионăн экономикăри чăн-чăн лару-тăрăвĕ пирки уçăмлăн та тĕрĕс хаклама май килет. Кун пек чухне хăйсен шухăшне чăн тĕслĕхпе никĕслемен фондсен ертÿçисене тата халап шайĕнчи аналитика çырăвĕсен авторĕсене итлени ниме те тăмасть», – палăртнă Энергетика тата финанс институтĕн аслă экономисчĕ Антон Табах.

■ **Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

Федор ЧЕРНОВ коллажĕ

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче кăларнă 119-мĕш указĕпе килĕшÿллĕн Чăваш Республикин ырлăхĕшĕн нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хула пуçлăхне **Леонид Ильич ЧЕРКЕСОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН"** орден медалĕпе наградăланă;

ĕçри çитĕнÿсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи "Инженери хÿтĕлевĕ" АУО директорне **Олег Иванович АЛЕКСЕЕВА,** "Шупашкарти электроаппаратура завочĕ" АХО персонал енĕпе ĕçлекен директорне **Сергей Алексеевич КОЛЬЦОВА,** Шупашкар хулинчи "Зеленстрой" АУО директорне **Олег Веняминович СКВОРЦОВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ХУЧĔПЕ** наградăланă;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи "Г.А.Ильенко ячĕллĕ "ЭЛАРА" ăслăлăх-производство комлексĕ" АУО генеральнăй директорне **Андрей Александрович УГЛОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă;

халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи "Горсвет" АУО директорне **Игорь Викентьевич ЗАРНИЦЫНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛĂХ ЫЙТĂВĔСЕНЕ ТИВĔÇТЕРЕС ĔÇЕН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят панă.

ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СӖНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

Амăшĕн çулĕпе

Канаш районĕнчи Малтикас хĕрĕ Галина Артемьева Çеçпĕл вăтам шкулĕнче вĕреннĕ чухне юлташĕсемпе икĕ çул эрнере пĕр хутчен Шăхасан больницине медицина сестрин ĕçне хăнăхма çÿренĕ. Кунта вĕсем ытларах санитарка тивĕçне пурнăçланă. Курс вĕçленсен хĕрсене кĕçĕн медсестрара ĕçлеме пултарнине çирĕплетекен хут панă. Шăпах çакăнта Галинăн тухтăр пулас ĕмĕчĕ амаланнă. Мĕн шутланине пурнăçлас тĕллевпе химии, биологи предмечĕсене тăрăшса шĕкĕлченĕ. Каникул вăхăтĕнче больницăра санитаркăра тăрăшнă.

Шкултан вĕренсе тухсан Малтикас хĕрĕ И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕн медицина факультетне вĕренме кĕмелли экзаменсене ăнăçлă тытнă. Ултă çул сиплев ĕçĕн вăрттăнлăхне алла илнĕ. 1994 çулта аслă пĕлÿллĕ çамрăк специалиста район больницин Ямашри участокне янă. Виçĕ çултан Шăхасана терапи уйрăмне сиплеме куçарнă. Вунă çул участок врачĕ пулнă. 2010 çултанпа – пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕ.

Галина Анатольевна хăйĕн ĕçне малалла тăсакан пуррипе кăмăллă – хĕрĕ Настя университетăн медицина факультетĕнче пĕлÿ илет.

■ **Виталий АЧЧА**

Влаç халăха çывăх пултăр

Влаçăн вырăнти органĕсен ĕçне çĕнетсе улăштарас ыйтупа йышăнакан саккун проектне халăхпа сÿтсе явни – пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унăн тивĕçĕ нумай енлĕ тата çыннсен пурнăçĕпе куллен çыхăнса тăрать. Ял-хулара мĕнле кăна ыйту сиксе тухмасть: кил-çурта, хваттере, коммуналлă хуçалăха, ĕçе вырнаçтарассине, çемьери лару-тăрава, право йĕркине сыхлассине, çамрăк ăрава воспитани парса тĕрĕс-тĕкел пăхса ÿстерессине тата ыттине пырса тивекеннисене татса памалла. Кун пек чухне нухрат та кирлĕ паллах. Тата чылайăшне влаçăн çÿлерех тăракан органĕсенче уçăмлатма тивет, мĕншĕн тесен вырăнтин çакна тумашкăн хевте çитмесен те пултарать.

Саккун проекчĕ пирки эпĕ çапла шухăшлатăп: районта пĕр пуçлăх кирлĕ, ăна халăхпа суйламалла. Район, ял тăрăхĕсен депутачĕсене те çапла майпах палăртмалла. Депутатсен пухăвĕн пуçлăхне «халăх тарçисен» хăйсен хушшинче уйăрмалла. Партисен списокĕпе кандидатсем тăратасси, суйласси вырăнсăр тесе шухăшлатăп.

Центрта тухса тăракан пичет кăларăмĕсем пĕлтернĕ тăрăх – Раççейри чи пуян 100 çемьерен 90-шĕ – Патшалăх Думин тата Федераци Канашĕн членĕсен Çÿллĕ шайри чиновниксен шалăвне чылай ÿстерчĕç.

Совет Союзĕ арканнă хыçăн реформаторсем пĕрлехи пурлăха сĕмсĕррĕн приватизацилени халăхшăн тăрăшни шутланмасть. СССРăн ют çĕршывсен умĕнчи парăмне Раççей хăй çине илчĕ, халăхăн перекет кассисенчи нухратне коммерци йĕркипе ĕçлекен Перекет банкне куçарса вкладчиксене çука хăварчĕ.

1991 çулхи укçапа паянхин хакĕсене илес тĕк – пĕрремĕшĕ иккĕмĕшĕнчен 100 хут сумлăрах. Чăн та, компенсаци пачĕç, малашне татах шантараççĕ. Манăн шухăшăмпа – халăх вклачĕсене тавăрса пама укçа çук тени сăлтав кăна, çакă – политика пулăмĕ. Перекет банкĕ питĕ пуян. Пичетре пĕлтернĕ тăрăх – унăн пуçлăхĕ уйăхсерен 3,5 млн тенкĕ шалу илет.

Влаçăн вырăнти органĕсем хăйсен ĕçне çĕнĕлле йĕркелесен ял-хула çыннисен пурнăçĕ сисĕнмеллех лайăхланасса шанас килет. Пур шайри депутатăн та халăх ырлăхĕшĕн тăрăшассине тĕпе хумалла.

■ **Ревокат МОИСЕЕВ, общество корреспонденчĕ.**

Комсомольски сали

Ахрăм

Эпир кăмăллă

«Хыпар» хаçатăн утă уйăхĕн 31-мĕшĕнчи номерĕнче пирĕн тăрăхри Элменкассинче пурăнакансем хăйсен ялне общество транспорчĕ çÿременнишĕн пăшăрханса çырнине вуласа тухрăмăр. Тĕрĕссипе, çул-йĕр ыйтăвĕ хамăра та чылай канăçсăрлантарнă. Ялти пуçаруллă çынсем çине тăнипе ăна татса пама пултартăмăр. Общество транспорчĕн маршрутне уçассишĕн Анатолий Максимов уйрăмах тăрăшрĕ.

Шупашкартан Кĕчкее çÿрекен автобус халĕ Услă Пукаш ялĕн пуçне çитичченех кĕрсе тухать. Пире питĕ меллĕ: республикăн тĕп хулине, Çĕнĕ Шупашкара е Сĕнтĕрвăрринe ларса кайма пулать. Хуракассинчи пасара та çула майăн кĕрсе тухатпăр.

Водительсем пассажирсемпе яланах кăмăллăн каласаççĕ. Вĕсем хăйсем те ку тăрăхрах çуралса ÿснĕскерсем: Николай Колбасов – Çĕнъялтан, Андрей Геннадьев /сăмах май, ашшĕ те шоферччĕ/ – Хуракассинчен.

Тавах вĕсене пире тĕрĕс-тĕкел илсе çÿренĕшĕн.

■ **Ял çыннисем ыйтнипе – Алексей ГЕРАСИМОВ, Александр ИВАНОВ, Николай ОХИЛЬКОВ.**

Сĕнтĕрвăрри районĕ

Ыр кăмăллăх

Куçса килнĕ çемьесене пулăшнă

Республикăри хĕрарăмсен канашĕн ыр кăмăллăх фончĕ Украинăран ирĕксĕр тарса килме тивнĕ çемьесене хÿтĕлемешкĕн пуçаруллă хутшăнать.

Çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче унăн хастарĕсем «Чувашиякурорт» хăна çуртĕнче вăхăтлăх пурăнакансене укçан пулăшрĕç: 134 пин тенкĕне 39 çемье тивĕçрĕ. Çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче вара Хевтесĕр ачасемпе çул çитмен çамрăксен реабилитаци центрĕнче кĕтес тупнă 12 çемьене 90 пин тенкĕ панă.

Йывăр вăхăтра хăйсене пăрахманшăн Украинăн кăнтăрхĕвел тухăç пайĕнчен куçса килнĕ граждансем республикăри хĕрарăмсен канашне чĕререн тав тунă.

Нушаллă çемьесене пулăшмашкăн япала, укçа пухасси малалла пырать. Ыр кăмăллăх акцине ăш пиллĕ ентешсем – предприяти-организацире вăй хуракансем, пенсионерсем, ĕç коллективĕсем – пуçаруллă хутшăнаççĕ.

Чăваш Республикинчи хĕрарăмсен канашĕн ыр кăмăллăх фончĕ пухăннă тата тăкаклана укçа-тенкĕ пирки халăха уççăн пĕлтерсе тăрать. Çакна палăртмалла: кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен унăн пухмачне 1523892 тенкĕ хывнă.

Хаклă ентешĕмĕрсем, йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ граждансене – Украинăри вăрçăна пула çуралнă вырăнтан ирĕксĕр тапранса тухнă тата Чăваш çĕрĕнче хÿтлĕх тупнă çынсене – пулăшмашкăн эсир те пуçаруллă хутшăнасса шанса республикăри хĕрарăмсен канашĕн ыр кăмăллăх фончĕн реквизичĕсене пĕлтеретпĕр:

Благотворительный фонд Чувашского республиканского совета женщин

4280000, г. Чебоксары, пл. Республики, д. 2, оф.119

ИНН 2130999669, КПП 213001001

р/с 40703810875000000039

в ОАО «Сбербанк России» Чувашское отделение №8613

к/с30101810300000000609

БИК 049706609

Назначение платежа: «помощь беженцам Украины»

Ыйту-хурав

Тăлăх ачана йышăнсан

Тăлăх е ашшĕ-амăшĕн хÿттисĕр юлнă ачана çемьене йышăнакана патшалăх пулăшăвĕпе хавхалантараççĕ-и?

О.ВАСИЛЬЕВА

Федерацин 1995 çулхи çу уйăхĕн 19-мĕшĕнчи «Ачаллă граждансене патшалăх пособийĕсем парасси çинчен» 81-мĕш саккунĕпе килĕшÿллĕн ачана воспитани памашкăн çемьене йышăннă /усрава илнĕ, опека /попечительлĕх/ çирĕплетнĕ, ашшĕ-амăшĕн хÿттисĕр юлнисене йышăнакан çемьене вырнаçтарнă/ чухне ашшĕ-амăшĕ паллă мар, вилнĕ, вилнĕ тесе пĕлтернĕ, вĕсем тĕлĕшпе ашшĕ-амăшĕн правине туртса илнĕ е çав ирĕке чикĕленĕ, вĕсем ăçтине палăртма май çук тесе йышăннă, харпăр хăй ĕçĕшĕн явап тытаймаççĕ /е ку енĕпе чикĕленĕ/, сывлăх хавшаккипе ачана пăхса усраймаççĕ, айăплав учрежденийĕнче лараççĕ, преступлени тунă тесе айăпланă, ачана пăхса усрассинчен тата унăн ирĕкне хÿтĕлессинчен пăрăнаççĕ е ăна воспитани паракан учрежденирен, медицина организацийĕнчен, социаллă хÿтлĕх учрежденийĕнчен илме килĕшмеççĕ пулсан пĕр хут тÿлекен пособи ирĕкне усрава илекенсенчен, опекунсенчен /попечительсенчен/, йышăнакан ашшĕ-амăшĕнчен пĕри тивĕçет.

Çемьене икĕ е ытларах ачана воспитани илме парсан асăннă пособие кашниншĕн тÿлеççĕ.

2014 çулта унăн виçи 13741,99 тенкĕпе танлашнă. Çичĕ çултан аслăрах сусăр ачана, çавăн пекех пиччĕшĕ-шăллĕне е аппăшĕ-йăмăкне усрава илсен пособи сумми кашни ачашăн 105 пин тенке çитет.

Чăваш Республикин 2004 çулхи чÿк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи «Ачаллă граждансене патшалăх пособийĕсем парасси çинчен» 46-мĕш саккунĕ тăрăх опекунсем, попечительсем, йышăннă ашшĕ-амăшĕнчен пĕри, патронат воспитателĕ ачашăн уйăхсерен тÿлекен пособие тивĕçет.

Унăн сумми кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен çакăн чухлĕ:

Пособие илекенсем	Пособин уйăхри виçи /пĕр ача пуçне, тенкĕпе/	
	сусăр ачасемшĕн	ачасемшĕн /сусăрсемсĕр пуçне/
2 çулчченхи ачасем	6708	6098
2-7 çулчченхи ачасем	6977	6343
7-18 çулсенчи ачасем	7662	6966

Йышăнакан ашшĕ-амăшĕнчен пĕрне уйăхсерен 1-2 ачашăн – 3295, 3 тата ытларахшăн 4680 тенкĕ парса хавхалантараççĕ.

Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.

Çемье

Ятарлă кăларăм

Кил ăшши

Александровсене уй-хир мĕнпе илĕртет?

Çурла уйăхĕ çĕр ĕçченне çĕнĕ тухăçпа тивĕçтерет. Уйра комбайнсем тырă ăмăртмалла вырнине кирек кам та çĕкленӳллĕ кăмăлпа сăнать-тĕр. Пучахсем тулли пулсан чун пушшех савăнать: тăрăшни сая кайман эппин. Акă пĕр пусă пушанать, тепри... Тирпейлĕ хуçалăхра вĕсенче çийĕнчех çĕртме тума пуçăнаççĕ.

Эпир Йĕпреç районĕнчи Пучинке ялне ĕçлĕ çул çӳревпе çитнĕ кун «Красный партизан» хуçалăхăн хирĕсенче те хĕрсех ĕçлетчĕç. Тырра пуçтарса кĕртнĕ лаптăксене çĕнĕ МТЗ-82 трактор сухаланине хăнăхнă пулăм пек йышăнтăмăр. «Хурçă ут» çывăхарах кĕрлесе çитсен... Кур та тĕлĕн – кабининче çап-çамрăк хĕр ларать! Черченкĕ пулнăран ăна 15-16 çултан ытла памастăн та – руль тытма ăна кам шанни кăсăклантарсах ячĕ. Кăлăхах иккĕленнĕ-мĕн: Дария Александрова трактор правине 4 çул каяллах тивĕçнĕ иккен: Канаш районĕнчи Вăтакас Кипеч вăтам шкулĕнче аслă классенче çак техникăн вăрттăнлăхĕсене алла илнĕ. Унтанпа турă пӳрнĕ мăшăрне тĕл пулса çемье çавăрма, ача çуратма ĕлкĕрнĕскер хăйне вырăнти хуçалăх ертӳçисем механизатор ĕçне сĕнсен турткалашса тăман, хаваспах килĕшнĕ.

Çĕнĕ çын ака та тутăр, утă çултăр...

Чăваш классикĕн Çеçпĕл Мишшин сăввинчи сăмахсене пăсакан автор йӳтесех кайнă тесе шухăшлать пуль вулаканăм. Çук, анчах хальхи вăхăтра хĕр-хĕрарăм кирек мĕнле техникăна та çăмăллăнах алла илнипе хавхаланнăран çапла калани те вырăнлах-çке. Тĕрĕссипе, этемлĕхĕн черчен çуррин представителĕсем хушшинче техникăна арçынран кая мар çăварлăхлакан харсăрсем кирек хăш саманара та йышлă пулнă. Шел, паян ял хуçалăхĕ çамрăксене питех илĕртмест те – Йĕпреç районĕнчи пĕк ӳкерчĕксене уй-хирте сайра хутра куратăн. Ӳкерчĕке вара туллин уçса пама ĕлкĕреймерĕм-ха. Дарийăн мăшăрĕ Константин Александров Пучинке уйĕсене куллен утăмласа виçет – агроном вăл. Çапла, çемьере кăна мар, ĕçре те хуçа теме пулать: уйра ăçта, хăçан, мĕн тумаллине унран лайăх кам пĕлтĕр?

«Хуçа» тесе çемье тĕлĕшпе шӳтлерех каларăм паллах. Нумаях пулмасть туй кĕрлеттернĕ çамрăксен килте камăн витĕмĕ пĕлтерĕшлереххине палăртас шухăш хальлĕхе пуçне те кĕмен-тĕр. Пĕр-пĕринпе малашне те паянхилле шăкăл-шăкăл пурăнсан – кун пирки вуçех те аса илмĕç. Çакна аван ăнлантăм: шӳте çав тери ăста арçынпа юнашар çывăх çыннисене нихăçан та тунсăх пусмĕ. Сарă çӳçлĕ, яштака пӳллĕ пукане сăн-питлĕ Дашăна Костя ырă çак енĕпех хăйĕн енне пăхтарни пирки пĕр иккленӳ те çук.

Техника «тухтăрĕсем»

Çамрăксем ашшĕ-амăшĕпе пĕр килте пурăнаççĕ. Хăтлă икĕ хутлă çурта вунă çул каялла хăпартнă Костьăн ашшĕпе амăшĕ. Роза Семеновнăпа Валерий Михайловичăн кăна мар, ачисен те /виççĕн вĕсем/ ăна хута ярассишĕн самай тăрмашма тивнĕ. Ывăлĕн, тĕпкĕч пулнине кура – пушшех.

– Ашшĕн сылтăм аллиехчĕ ĕнтĕ: алăк-и, чӳрече-и – йăлтах хăйсем ăсталарĕç. Пире йывăр пуласран шикленсе Костя шкул пĕтерсен аслă вĕренӳ заведенине каяс та теменччĕ. Ашшĕ пекех мĕн пĕчĕкрен техникăна юратнăран Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине инженера вĕренме сĕнтĕм. Ӳкĕте кĕчĕ, сисмесĕрех дипломлă та пулчĕ, – каласа кăтартать амăшĕ.

Техника тенĕрен, ăна чăнласах ачаранах юратать-мĕн çамрăк арçын. Пĕррехинче ăна йыснăшĕ çӳреме пăрахнă «Минск» мотоцикл парнеленĕ.

– Аппаланса пăхсан, тен, чупакан тăвăн, – тенĕ вăтам классенче вĕренекенскере.

Темĕн те пĕлме ăнтăлакан ачана çакă кăна кирлĕ пулнă тейĕн – пăрса пăхман гайкаболт юлман! Амăшĕ халĕ ĕнтĕ тарăхса мар, ăшшăн çеç аса илет: «Вăранса кайрăм çĕр варринче – Костя килте çук. Вăхăт – çур çĕр иртни икĕ сехет. Ашшĕне вăрататăп – ывăлăн кравачĕ пушах тетĕп. «Çухалнă çын» вара картишĕнче ним пулман пек мотоцикл умĕнче «ташлать».

Çапла, чуна киленӳ кӳрекен ĕçе пурнăçланă чухне вăхăт шунине, кунпа каç улшăннине те туймасăр юсанăюсанах. Костя хăйĕн пурнăçĕнчи малтанхи «хурçă утне». Çавăнпа та Даша аллинчи МТЗ-82 ăнсăртран /çĕнĕ пулин те тем пулса тухас пур/ чăхăмларĕ тĕк ăна чĕртекен «тухтăр» кам пулассине тавçăрса илме кăткăс мар.

Хăтлă çурта ача-пăча тултартăр

Валерий Михайлович механизаторсен курсĕнчен вĕренсе тухнăранпах – 30 çул ытла – тăван хуçалăхра тăрăшать. Хура ĕç тесе нихăçан та тиркешмен. Ял çынни вараланасран шикленсен пурнăç тума йывăр тесе çирĕплетет. Сăмах май, йышлă çемьере çитĕннĕ вăл. Шел, 9 ачаран паян пиллĕкшĕ кăна сывăчĕрĕ. Ашшĕ-амăшĕ те çĕре кĕнĕ. Тăван килĕ, тахçан кĕрлесе-шавласа тăнăскер, пушанса юлни чунне шĕкĕ пек кăшлать. /Валерий Михайлович тĕп килтен уйрăлса тухнă/.

Килĕнче хăйсемпе пĕрле пурăнакан мăнукне Тимофея ыттисенчен те вăйлăрах юратнине пытараймăн – йăха малалла тăсаканĕ-çке вăл. Çулталăкран иртнĕ шăпăрлан пуçĕнче хальлĕхе пурнăçри кунашкал пĕлтерĕшлĕ ыйтусем пирки шухăш çук-ха, анчах аслашшĕн ăшшине питĕ лайăх ăнланса ун патне çав тери турăтăнать.

Александровсен килĕнчи çĕнĕ çын çуралса ӳснĕ çемье те йышлă иккен: Дашăсем çиччĕн пĕр тăван. Тен, çакна шута илсе турри парсан çамрăк амăшĕ хăйĕн тĕпренчĕкне Тимошăна йăмăк-шăллĕ енчен кӳрентермĕ? Икĕ хутлă кермен пек çуртра ача йышлă пулнине курас килет аслашшĕпе асламăшĕн. Вăхăт кăтартĕ.

Эпир вара хаваслă пысăк йыш патне, тен, черетлĕ материал çырма çула тухăпăр. Çакăн çинчен Константина шӳтлерех систерсен ялти хастар специалист çухалса каймарĕ: «Ун чухне пушă алăпа ан килĕр вара. Республикăн ертӳлĕхне ӳкĕте кĕртсе парнелĕх пирĕн хуçалăх валли тепĕр трактор илсе килĕр. Йыш хушăнсан ытлашши пулмĕ», – терĕ. Апла-и, капла-и – тăван çĕртен писме мар, ăна юратакан, ашшĕ-амăшне тата ялйыша хиселесе кунтах тĕпленнĕ Константинпа унăн савнă мăшăрĕн Дарийăн пурнăçĕн çĕнĕ страницисем çутă та илемлĕ пуласса шанатпăр.

■ **Ирина ПУШКИНА**

Çамрăксене пил пачĕç

• Юбилярсем çамрăк мăшăра пил параççĕ.

Изумруд туя пĕрле пурăнма пуçланăранпа 55 çул çитсен паллă тăваççĕ. Ăна кĕтсе илме хĕрӳ юрату, чăтăмлăх, ăнланулăх, тимлĕх кирлĕ. Çак сăмахсене Çĕнĕ Чалкасси ялĕнче пурăнакан Михаил Матвеевичпа Нина Константиновна Матвеевсем пиркиех каланăн туйăнать. Вĕсен кун-çулне тишкерсен чăннипех те çапла иккенне тĕшмĕртетĕн.

Михаил Матвеевич нумай ачаллă çемьере çитĕннĕ. Ашшĕ – райпо склачĕн заведующийĕнче, амăшĕ колхозра ĕçленĕ. 1948 çулта çичĕ класс пĕтерсен Киров облаçĕнче вăрман каснă. Часах çар хĕсметĕнче тăма вăхăт çитнĕ. Виçĕ çул Памир тăвĕсем çинче çĕр-шыв чиккине сыхланă. Салтак тумне хывсан автомеханика вĕреннĕ. «Родина» колхозра механикра тăрăшнă, тракторсен бригадине ертсе пынă, тĕп инженерта вăй хунă. Темиçе çул хуçалăхри профсоюз комитечĕн председателĕн ĕçĕсене тунă. Вун пĕр çул Çĕнĕ Чалкасси ял Канашĕн пуçĕнче тăнă. Тивĕçлĕ канăва 1995 çулта Канашри ял строительствин комбинатĕнче ĕçлесе тухнă. Унăн ĕçне Хиселе грамотисемпе, хаклă парнесемпе палăртнă.

Нина Константиновна Кивĕ Ахпӳрт ялĕнче çут тĕнчене килнĕ. Шаккăл вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухсан пĕлĕвне Канашри педагогика училищинче ӳстернĕ. Хĕрĕх çула яхăн Çĕнĕ Чалкасси шкулĕнче пуçламăш классене вĕрентнĕ. Пенси çулне çитсен те шкула каякан сукмака тата икĕ çул такăрлатнă. Унăн ĕçри хастарлăхне «РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» паллăпа, «Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ учителĕ» хиселĕ ятпа палăртнă. Грамотăпа диплом шучĕ те сахал мар.

Михаил Матвеевичпа Нина Константиновна мĕн пĕчĕкрен нимĕнле ĕçрен те ютшăнман, пурнăç тути-масине çамрăклах ас тивнĕ. Иккĕшне те амăшĕ пăхса ӳстернĕ, ашшĕсем Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин çапăçу хирĕнчен тавăрнайман. Пĕрремĕшĕн çемйинче – пилĕк, иккĕмĕшĕн тăватă ача ӳснĕ. Матвеевсем ывăлпа хĕр çуратса пурнăç çулĕ çине кăларнă. Геннадийпе Елена ашшĕпе амăшĕн тăрăшулăхне курса хăйсем те явăплă çынсем пулса ӳснĕ. Иккĕшĕ те Канашра ĕçлесе пурăнаççĕ, çемьеллĕ. Хальхи вăхăтра Андрей, Ирина, Марина, Оля, Юля мăнукĕсем тата кĕçĕн мăнукĕ Валерия Михаил Матвеевичпа Нина Константиновнăшăн чи пысăк пуянлăх.

Район администрацийĕн граждан тăрăмĕн акчĕсене çыракан пайĕ «Ăрусен тĕл пулăвĕ» ятпа хăйне евĕр уяв ирттерчĕ. Ăна пайăн тĕп эксперт специалисчĕ Ирина Морозова йĕркелесе-ертсе пычĕ. Уявăн тĕп сăнарĕсем Матвеевсем пулчĕç. Вĕсем хăйсен пурнăçĕпе паллаштарчĕç, Ирина Петровна панă ыйтусене хуравларĕç. Михаил Матвеевичпа Нина Константиновнăна çемьеллĕ пурнăçăн хисеплĕ юбилярĕсен районти кĕнекине кĕртрĕç, район администрацийĕн пуçлăхĕн В.Софроновăн саламлă çырăвне пачĕç.

Юбилярсене ачисем, мăнукĕсем, тăванĕсем, Çĕнĕ Чалкасси ял тăрăхĕн тĕп специалисчĕ Л.Алексеева пĕр çулпа алла-аллăн тытăнса утма пуçланăранпа 55 çул çитнĕ ятпа саламларĕç, чечек çыххисем парнелерĕç, Г.Зиновьев ертсе пыракан «Çăлкуç» ансамбль илемлĕ чăваш юррисем шăрантарчĕ.

Çак кунах Аслă Мами ялĕнчи И.Николаевпа А.Анисимова ятсăр пӳрнисене çĕрĕ тăхăнса çĕнĕ çемье тĕвĕленнине пĕлтерчĕç. Иванпа Анжелăна пĕрлешнĕ ятпа саламлама килнисен йышĕ зал тулли пулчĕ. Михаил Матвеевичпа Нина Константиновна çамрăк мăшăра хăйсем пекех нумай çул пĕрле пурăнма ырлăх-сывлăх, такăр çул сунчĕç.

■ **Виталий АЧЧА.**
Канаш районĕ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕ

Кĕскен

Демографи картти лайăхланать-и?

Республикăри ЗАГС уйрăмĕсем кăçалхи 7 уйăхра миçе «çĕнĕ кайăка» регистрациленĕ пирки интереслентĕмĕр. 10239 ача çуралнă иккен çак тапхăрта. Ку пĕлтĕрхи асăннă тапхăртинчен 95 пепке ытларах. Палăртнă вăхăт тăршшĕнче арçын ачасем тĕнчене йышлăнрах килнĕ. Йĕкĕрешсем те нумайăнмĕн: республикипе вĕсен хисепĕ 118 патнех кармашнă. Муркаш районĕнче, Шупашкар тата Çĕмĕрле хулисенче вара виçĕреш кун çути курнă тĕслĕхсем те пур. Пепкесен 40,6 проценчĕ – çемьери пĕрремĕш ачасем, 42,3 – иккĕмĕш, 13,3 проценчĕ – виççĕмĕш.

Хальхи вăхăтра ашшĕ-амăшĕ ача валли ят суйланă чухне унăн янăравлăхне шута илет тесе палăртаççĕ ЗАГС ĕçченĕсем. Ульяна, Милана, Арина, Матвей, Глеб, Арсений... – иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен варринче кун пеккисем сайра хураканнисен хушшинче те курăнсах кайман, халĕ вара вĕсем модăна кĕрсех пыраççĕ иккен. Славянсен ĕлĕкхи ячĕсене килĕштерме тытăнни сисĕнет: Богдан, Святослав, Ярослав, Мирослава, Есения, Ярослава ятлисем йышлансах пыраççĕ. Чи нумайййисем вара çаксем: Кирилл, Максим, Артем, Анастасия, Мария, Дарья.

Пулас амăшĕсен фестивалĕ — Вăрмарта

Демографи лару-тăрăвне лайăхлатассине республика ертӳлĕхĕ тимлĕ сăнаса пырать. Юлашки 20 çул тăршшĕнче пуçласа 2012 çулта халăх шучĕ чăнласах ӳсме пуçлани палăрнă. Телее, паян та пирĕн региона çакă пурнăçланса пырать. Акă кăçалхи пĕрремĕш çур çул пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх Чăваш Республики федерацин Атăлçи округĕнче халăх шучĕ ӳсес йӳтĕм сыхланса пыракан ултă регион шутне кĕнĕ.

Демографи карттине лайăхлатсах пырас тĕллевпе ЗАГС органĕсен ĕçченĕсем тĕрлĕ мероприяти йĕркелеççĕ. «Манăн атте маттур» конкурс, ача кӳмисен, кавча каякан пикесен парачĕсем, сăпка юррисен уявĕ...

Çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче Вăрмар районĕнче пирвайхи хут «Тĕлĕнтермĕше кĕтнĕ чух» ятпа пулас амăшĕсен фестивальне йĕркелерĕç. Паллах, кунта хăйсен пĕрремĕш пепкине кĕтекенсем анчах мар, çемьери черетлĕ «çĕнĕ кайăка» кĕтекенсем те хутшăнчĕç. Ăш пиллĕ тĕл пулура ЧР юстици министрĕн çумĕ Галина Чернова вĕсене ырă суннă май çивĕч ыйтусем пулсан пусăрăнмалла маррине аса илтерчĕ. «Кирек мĕнле йывăр лару-тăрура та пулăшакансем яланах пур: тухтăрсем, психологсем, ЗАГС органĕсен ĕçченĕсем, чиркӳ çыннисем. Çемье çирĕп пултăр тесен пурин те пĕр чăнлăха ăша хывмалла: пурнăçра ытларах «эпĕ» теме мар, «эпир» тесе калама тăрăшасчĕ».

■ **Влада МИРСКАЯ**

Несĕлсем

Фронтран янă çырусем

Вĕсем Рюрик Фандеев килĕнче темиçе кăна сыхланса юлнă çав. Амăшĕ Марье аппа питĕ тирпейлĕ упраса пурăннă ывăлĕн çывăрăвĕсене.

«...Ладога кӳлли патнелле пыратпăр. Полкран çурри кăна юлтăмăр. Чăвашсем те юлмарĕç, никампа каласма çук темелле. Командирсем тăшмана çĕнтеретпĕрех тесе те хавхалантараççĕ, те?.. Ывăла – Рюрике – ырă-сывă ӳстерех. Урăх çыраймастăп.

2.02.1942» – вулатпăр вĕсенчен пĕринче.

Мĕншĕн «урăх çыраймастăп» тенĕ-ши Николай Фандеев фронтран Вăта Пукаша, мăшăрĕ патне вĕçтернĕ çырура? Акă мĕншĕн: вĕсен çар чаçне тăшмансем хупăрласа илеççĕ. Н.Фандеев çичĕ ютсенчен тарнă май пăрлă тарасана чăмать. Çӳлтен юр хӳсе кайнăскере асăрхайман чăваш салтакĕ. Кăкăр таран пăрлă шывра чылаях тăма лекет. Çӳлте – фашистсем кумаççĕ. Çăлăнăç – партизансенче. Пĕрле уйăх ытла нимĕçсене тӳпкеççĕ. Анчах Николая тарасара вăрах тăнă хыççăн шăнса пăсăлнă ӳпки канăç памасть: шыçать те шыçать. Салтака самолетпа Мускава ăсатма май тупнă.

Каярахпа «Н.Фандеева Мускав крематорийĕнче «пытарнă» хыпар çитет яла.

Вăрçăччен Николай Иванович Фандеев физрук пулнă. Йĕлтĕрçĕсен командинче хăй те ял чысне хӳтĕлеме Шупашкара пĕрре кăна мар килнĕ.

Паян Фандеевсен йăхне Рюрикĕн 6 ывăлĕ тăсать. Тĕп килте пурăнакан Эдуард ялтах ветеринарта тăрăшать. Суйкка аппапа Рюрик пиччĕ ватлăхра мăнукĕсемпе савăнаççĕ. Вĕсем мăн аслашшĕ пекех çĕр-шыва юратакан паттăрсем пуласса шанаççĕ.

■ **А.АНИШОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ

Иртни тата хальхи

Вăйăа тухма вăй тупаттăмăр

Çĕрпӳ районĕнчи Шалчакасси ялĕнче çуралса ӳснĕ эпир, Мария Григорьевнăпа Аркадий Сидорович Сидоровсем. Пĕр шкултах, пĕр класрах вĕреннĕскерсене çитĕнсен пурнăç сукмакĕпе те пĕрлех утма пӳрчĕ шăпа. Акă тăнлав тĕлĕнчи çӳç те тахçанах шуралчĕ – ачалăхăмăр тата шухă çамрăклăхăмăр халĕ те асран тухмасть.

1941 çулхи çу уйăхĕнче çичĕ класс вĕренсе пĕтертĕмĕр. Малашнехи пурнăç урапи пач урăх çулпа кусма пуçласса пирĕнтен нихăшĕ те тĕшмĕртме пултарайман паллах. Çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланчĕ...

Тăван колхозри мĕн пур йывăр ĕç ачасемпе хĕрарăмсем тата ватăсем çине тиенчĕ. Акаттăмăр, сӳрелеттĕмĕр, çумлаттăмăр, çулаттăмăр, выраттăмăр – çуркуннерен хура кĕркуннечченех уйра тăрмашаттăмăр. Çĕр улмине иккĕмĕш çăкăр тетчĕç те – вăл вара чăн-чăнни вырăнĕнчехчĕ. Вырма пуçлансан куллен тенĕ пек Канашри элеватора 12-15 лав каятчĕ. 50 килоллă михĕсене трап тăрăх çĕклесе хăпараттăмăр. Хушăран вăйран кайса ӳкни те пулнă: ун пек чухне миххе тӳрех пушататăн. Канаша çити пирĕн ялтан – 30 çухрăм.

Тырăпа ĕç вĕçлесенех патшалăха çĕр улми памашкăн тытăнаттăмăр. Йывăрччĕ, анчах нихăçан та пуç усман. Кĕркунне-хĕлле те ĕç пурччĕ. Мария çуллахи вăхăтра бригадăпа Атăл леш енче торф кăларнă пулсан хĕллехи кунсенче вăрманта вутă хатĕрлеме хутшăнатчĕ. Эпĕ Мускав-Хусан трасса çинче Куславккка районĕнче çул-йĕр строительствинче вăй хураттăм. Кунта кашни хăйне хушнине пурнăçлатчĕ. Мĕн пур ĕçченĕн 1 кубла метр чул, çавăн чухлех хăйăр хатĕрлемеллеччĕ, вĕсене çул-йĕр мастерне памаллаччĕ. Унсăр пуçне çĕр чавассипе нумай аппаланнă. Кун çинчен çырма темех мар пек, анчах çул çитмен çамрăкшăн кунашкаллине пурнăçласси самай тертлĕ пулнă. Апла-и, капла-и, тар кăларса кунĕпе ĕçлесен те никам та нăйламан. Пурнăç пирĕнтен çапла ыйтать тенĕ те – лăпланнă. Каçсерен вăйăра савăннă.

Хальхи çамрăксенчен хăшĕ-пĕри ун чухне аслă классенче тӳлевлĕ вĕрентни çинчен пĕлмест те пуль. Вĕренӳ çулĕшĕн 150 тенкĕ тӳлетчĕ атте-анне. Çакнашкал лару-тăрура уроксене вайăн-шайăн ларса ирттерме намăс пекчĕ. Пĕлӳшĕн чăнласах çунса вĕреннĕ ун чухне.

Чылай вăхăт Çĕрпӳри район больницинче выртса сипленмелле пулчĕ манăн. Салтака кайма та ят тухрĕ – аслă классене вĕренсе пĕтереймерĕм. Çапла вĕренĕве вĕçлемесĕрех çар ретне тăма тиврĕ. Хĕсметре 7 çул пултăм. Салтакран таврăнсан кăна аттестат алла илме тӳр килчĕ. Ун чухне ĕçлеме те тытăннăччĕ ĕнтĕ: Чурачăкра /вăл вăхăтра район центрĕ шутланнă/ кино кăтартассине йĕркелерĕм. Пĕлӳ илес ĕмĕт малалла та сӳнмерĕ: Саратоври Д.И.Курский ячĕллĕ юридици институтне вĕренме кĕтĕм. Ун чухне эпĕ мăшăрланма та ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ. Салтакран тăван яла таврăнсан Марийăпа килĕштерсе çӳреме пуçларăмăр, çемье çавăртăмăр.

Диплом илнĕ хыççăн Элĕк, Çĕмĕрле районĕсенче судьяра ĕçлеме шăпа пӳрчĕ. Каярах – республикăри Юстици министерствинче тĕп специалиста тăрăшрăм. Отставкăна кайиччен 18 çул Аслă судра судья тивĕçĕсене пурнăçлама тиврĕ.

Мария Григорьевнăпа пурнăç çулĕпе алла-аллăн утма тытăннăранпа акă ĕнтĕ 60 çул çитрĕ. Икĕ ывăла пурнăç парнелесе ура çине тăратрăмăр. 4 мăнук, пурте аслă вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ илме тĕв турĕç. Иккĕшĕ дипломлă пулчĕç те ĕнтĕ.

Хальхи пурнăçра çамрăксене хăйсен ĕмĕчĕсене пурнăçлама çул уçă. Вĕрен, ĕçле, ан ӳркен – малашлăху алăра. Мирлĕ тӳпе айĕнче пурăннă чухне çакна ăнланасчĕ те кашни ырă саманта хаклама тăрăшасчĕ.

■ **Аркадий СИДОРОВ,**
ЧР тава тивĕçлĕ юрисчĕ

Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.

«Эпĕ Нобель премине илеймесен чăваш халăхĕ тĕппипех пĕтет»

/Чăваш ятне тĕнче умне кăларнă Айхин вăрттăн шухăшĕ пирки/



● *Питер Франс тата Геннадий Айхи .*

«Чыса сыхлама чыс мĕнне пĕлес пулать, – вулатпăр О.Н.Терентьева пухса хатĕрленĕ «Ваттисен сăмахĕсенче» /Шупашкар, 2007, 246 с./. – Этем ятне çĕртес мар теççĕ. Ятна ярса ан çÿре теççĕ. Ятсăр çынна йытă вырăнне те хумаççĕ».

АЙХИ ЧĂВАШ ЯТНЕ ТĔНЧЕ УМНЕ КĂЛАРЧĔ.

Этем нихçан та чăвашăн тĕнчери вырăнĕ пирки шухăшламан пулсан нихçан та никам та унран: «Эс мĕнле халăх çынни, мĕн пур ара сирĕн?» – тесе ыйтман пулсан АЙХИ ЧĂВАШ ЯТНЕ ТĔНЧЕ УМНЕ КĂЛАРЧĔ тени – уншăн пуш сăмах.

«Айхи шăв-шавĕ хупласа хучĕ», – миçе хут илтмен пулĕ çапла каланине. Темле тимлесе итлесен те «Айхи шавĕ» тенĕ чух «Айхи шавĕ – чăваш шавĕ» текен шухăш-кăмăла туйма çукчĕ. Вĕреннĕ, ăслăтăнлă çынсемех, çыравçă-поэтсемех... Айхи ĕçне шăв-шав пек, ниме тăман япала пек хаклани мĕнрен килет? Чăваш халăхĕ халăх пулса çитменнинчен, кашни çитĕнÿ-çĕнтерĕве ЧĂВАШ ÇИТĔНĔВĔ-ÇĔНТЕРĔВĔ пек курма-туйма пĕлменнинчен, чăваш наци чапĕ-чысĕ-ячĕ-пĕлтерĕшĕ пирки шутламаннинчен, чуна ыраттарманнинчен...

«Çынни лайăх пултăр, мĕнле халăх çынни пулни пĕлтерĕшлĕ мар...»

Ытти халăх çыннисемпе чăнтан çапăнсан çак шухăш чăлпар саланать... Вилĕмсĕр ыйту: «Сирĕн мĕн пур?» – мала тухать.

Пĕчĕк ача уçăлма тухнă чух ялан тетте суйлать. Выляма кăна мар, ытти ачапа хутшăнава кĕме те. «Манăн машина пур», – кăтартать пĕчĕкскер теприне. «Манăн та машина пур... Атя пĕрле вылятпăр...» Пысăккисем те, халăхсем те ача пекех... Çут çанталăк йĕрки çапла. Хутшăнава кĕме санăн мĕн те-тĕр пулсан пулмалла.

Наци туйăмĕ, чăваш хăйне ЧĂВАШ пек туясси пирĕн çывăрать-ха. Юта, ытти хулана укçа тума çÿренĕ кашни чăвашах *тĕнче тени* пирĕн халăх пирки мĕн шухăшланине каласа пама пултарать. Анчах ку пĕлÿ-опыт темшĕн çырăнмасть. Хут çине куçмасть – сăмах вĕççĕн кăна çÿрет.

И.Д.Никитин-Юрккин кун кĕнекинчи /1906, çу, 15/ чăваш ятне хупласа тăракан тĕтре халĕ те сирĕлмен-ха: «Вырăссем А.Ломоносов чăвашпа тавлашнă чух: «Сирĕн юрă çук, кĕвĕ çук, «аййăр-айяр» тесе анчах юрлатăр», – теççĕ. «Апла мар – пирĕн юрăсем пур. Юрлаканĕ хăйлерех хăй сăмахне туса юрлать», – тетпĕр. Апла каласан питех тăна кÿртмелле мар. Ĕлĕк, 1897 çул, Н.И.Ашмарин хăй пĕр çĕрти чăваш юррисене кĕнеке тутарнăччĕ, çавна кăтартмалла пулĕ-и-мĕн?! Тата К.Прокопьев çаптарнă «хĕр йĕррисене» кăтартмалла пулĕ».

Чăваш чĕлхипе литературине хулара вĕрентекенсем ачасем чăваш пирки хăйсен ăшĕнче е çççăнах мĕн шухăшланине каласа пама пултараççĕ. 1996-1997 вĕренÿ çулĕнче эпĕ те шкулта ĕçлерĕм. Ачасем: «Мĕн тума кирлĕ чăваш литератури?» – тесен «эпир те çынсемех, пирĕнпе те тĕнчере интересленеççĕ» теттĕм. Айхи шăв-шавĕ – ачасен тимсĕрлĕхне, ăс-тăнпа чун сÿрĕклĕхне çĕнтермелли шанчăклă мелсенчен пĕриччĕ.

Дмитрий Воробьев философ аса илнинчен: «Айхи ятне пуçласа эпĕ 10-мĕш класра илтрĕм. Ун чухне «Тăван ен культурине» вĕрентме пуçланăччĕ. Айги хушаматне вырăс литератури учебникĕнче тĕл пулсан тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм: «Мĕнле пĕр çын икĕ литература классикĕ пулма пултарать?» – тесе. Калас пулать, ун чухне Канаш шпанисем чăваш тенине пач йышăнмастчĕç. Вырăсла акцентпа каласан – сана патак, санран куласçĕ, эс çын шутлă мар...» /«Меценат», 2005, 25 с./.

«Çыравçăсем, чылайăшĕ, ун пирки шăл витĕр кăна каласçĕ», – çырнăччĕ Г.Янилкин «Бросивший вызов толпе» тĕрленчĕкĕнче / «Чăваш ен», 1995, 44 №/. Айхи Шупашкара килнĕ ятпа ирттернĕ пур тĕл пулăва та хутшăнма тăрăшнă. Шантарсах калатăп: унта çыравçăсем пулманпа пĕрех. «Айхи, хăйĕн ятне çĕклесе, манăн ята та, чăваш çыравçин ятне, тĕнчере çĕклет» тени илтĕнмерĕ, палăрмарĕ. Габриэль Гарсиа Маркес Латинла Америка литературине тĕнче шайне кăларнă, Чингиз Айтматов кăркăс халăхĕпе тĕнчене тĕлĕнтернĕ хыççăн кăркăс çыравçисемшĕн аслă тĕнче уçăлнă.

«Çĕкленет, тĕнчене хăпарать Çĕньял арĕн поэзи çăлтăрĕ, – хавхаланса çырнăччĕ Атнер Хусанкай. – Европа чăвашсене чыслать».

Маркеспа Айтматов тапратса янă хатĕр чăваш хутлăхĕнче мĕншĕн ĕçлеменни те паллă. «Чăваш кĕвĕçĕвне патриархаллă хутлăхра çĕнĕлĕхе юратманнипе ăнлантарма пулать. «Вĕçкĕн, – тетпĕр эпир, – ăна пуринчен ытла кирлĕ». Вара пĕр каварлă пулса тытăнатпăр ăна пылчăкра путарма. Анекдот та пур кун пирки. Турă тамăка аннă тет, тĕрĕслеме. Çÿреççĕ тет ăна кăтартса: сăмала тултарнă хурансем вĕреççĕ, шуйттан çурисем хуран айне вут хураççĕ тет. Пĕр хуранĕ патĕнче хуралçăсем ытла та пит йышлăн тет. Килĕшмен ку Турра.

– Мĕншĕн ун чул нумайăн? – тесе ыйтать тет.

– Урăхла май çук. Еврейсем хуранра. Пĕри тухсассăнах хăй хыççăн ыттисене туртса кăларать.

Турă малалла тĕрĕслет тет. Курать: пĕр хуран патĕнче пач хурал çук. Ăнлантарççĕ тет Турра:

– Чăвашсем хуранра. Вĕсене хурал кирлĕ мар. Хурантан тухас текеннине вĕсем хăйсемех каялла туртса антараççĕ» /А.П.Леонтьев, Н.И.Егоров. Откуда мы? Куда идем? Беседы под Древом Познания. Книга 1. Чебоксары: Издательский дом «Хыпар», 2012. 102 с./.

Айхин тĕнчене тухас кăмăлтуртăмне кар тăрса вăй хушас пулсан Айхине хăйне те, чăваш халăхне те урăхларах шăпа тăхма пултаратчĕ-и тен? Вара эпир: «Камсем эсир? Сирĕн мĕн пур?» – тенине хирĕç: «Пирĕн Нобель лауреачĕ пур», – тенĕ пулăттăмăр-и?.. «Айги» кĕнекере /Мускав, 2003. Французларан О.Северская куçарнă/ Леон Робель Айхипе калаçнине /1994, раштав, 7/ илсе парать: «Эпĕ пирĕн калаçу пачах та урăххи пирки /пирĕн хушăмăрта хура кушак каçса кайни пирки/ пулать пулĕ тенĕччĕ. Пирĕн калаçу вăраха кайрĕ. Калаçасса, тĕрĕссипе, Айхи калаçрĕ. Унăн монологĕ – Нобель премийĕ пирки. Хăйĕн пĕчĕк халăхĕшĕн преми мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулни пирки пулчĕ ун сăмахĕ». Вячеслав Куприянов «АЙГИтация: миф, придуманный «западными» славистами» статйинче / «Литературная газета», 23-29 июня 2004 г. № 24/ Питер Франспа 1992 çулта Эдинбургра калаçнине асăнать: «Айхи Франса: «Эпĕ Нобель премине илеймесен чăваш халăхĕ тĕппипех пĕтет», – тенĕ иккен».

Леон Робель Айхи пирки пирĕн куçсене уçать /Геннадий Николаевич хăйĕн пирки космополит тесе, чăваш тĕнĕн пуласлăхĕ çук тесе, чăвашла синкер тĕнче туйăма палăртма çук тесе чăвашлăхшăн çунакан нумай çынна хăйĕнчен сивĕтрĕ/. «Айги» кĕнекере пирĕн поэт – чăваш ачи. Хăш-пĕр факт кăна: «Антуан Витез Шайо Наци театрĕнче Айхине халалласа поэзи каçне ирттерессине пĕлсен Айхи ман пата çыру çырать /1982, çĕртме, 3/: «Каç валли «Алран кайми» ярса паратăп. Халăхăмăра та хутшăнтарас килет манăн ку каçра. Юрă урлă та пулсан. Ухмаха ернĕ хальхи саманара эпĕ халăхăмăр пирки ытларах та ытларах шухăшлатăп. Ку вăл – ас тăвăмпа çыхăннă пулăм. Ăна ăнлантарма çукпа пĕрех. Тинех тавçăрса илтĕм пек: «Антологи» – халăхăмăр умĕнче парăма татни. Урăх чĕлхене, урăх культурăна куçнăшăн эпĕ ун умĕнче айăплă».

Поэзи каçĕ пуçланас умĕн, чăнах та, чăваш халăх гимнĕ «Алран кайми» янăрарĕ. Антуан Витез театра пухăннисене чăвашсем пирки, Айхи пирки пĕлтерчĕ.

Пĕр иккĕленмесĕрех калама пулать: вырăсла çырнисем пĕтĕм тĕнчене чăвашсем патне тата вĕсен культури патне çавăрчĕç».

«1991 çулта Танлаштару поэтикин тĕп вырăнĕ /ун чухне ăна эпĕ ертсе пыраттăм/ Айхине Нобель премине илме тăратрĕ. Текстне эп хатĕрлерĕм».

«Айхи йĕри-тавра тĕнче йышăнма пултарайман япаласем çÿреççĕ», – тенĕччĕ Айхи çине йĕрĕнсе пăхакан пĕр чăваш. Швеци академикĕсем патне çырнă çырăва алă пуснисен ячĕсене вулатăн та пирĕн сăвăçăмăршăн мăнаçланма пуçлатăн.

«Айхи поэзине çирĕм ытла чĕлхене куçарнă. Айхи поэзийĕ сăвăç çитĕнĕвĕ кăна мар. Вăл тĕнче аренине культурăри тĕп юхăмĕсенчен айккинче тăнă халăх тухнине пĕлтерет», – çавăн пек йĕркесем пур çырура.

Леон Робель «AIGUI» кĕнекере хускатнă ыйтусем Айхи пирки калаçнă чух тарăна кĕме хистеççĕ:

«Айхи пултарăвĕ, ун тĕнчери чапĕ, хăй тăван çĕршывĕнче вăл хывнă çул пире 2 пин çуллăх вĕçĕнчи культура пирки ыйтусем лартма хистет. Поэзи ку вăхăтра мĕнле вырăн йышăнать, мĕнле йывăрлăхсем тухаççĕ ун умне тата вăл мĕн тума пултармалла? Мĕнле майпа Историн аслă çулĕсенчен айккинче çĕр-çĕр çул пурăннă халăхран историн паянхи тапхăрне, тен, тĕпрен палăртакан поэт тухнă? Хăйĕн тĕнчине хупă, вăрттăн тĕнче пек йĕркелекен поэт пултарăвĕ мĕншĕн ку вăхăтшăн чи çутă пултару-ши? Хамăн кĕнекере эпĕ çак ыйтусен тупсăмне шырасшăн. Ыйтусене лартса Айхи поэзийĕн çÿллĕшне палăртасшăн».

Юлашки вăхăтра Айхин тĕнчери чапне темĕнле каварпа ăнлантараççĕ. Леон Робельпе, Питер Франспа, Владимир Новиковпа эпĕ калаçса та курнă. Ĕçĕсене тимлĕн вуланă. Вĕсем тата тĕнчери пин-пин айхиçĕ пирĕн сăвăçăмăра юратнинче, ăна тĕпченинче эпĕ нименле усал шухăш та курмастăп. Чун та манăн çавнах калать. «Чăвашăн тĕнче курни материалистла мар, материальнăй», – тенĕ иккен Айхи 1959 çулта Шупашкара килсен /«Тăван Атăл», 2009, 8№, 10 с./. Айхиçĕсем Айхире нименле тупăш та шырамаççĕ. Чун ыйтнипе, сăвăçа юратнăран параççĕ вĕсем ăна чи хаклă япалана – хăйсен вăхăтне. Айхи пек пулăмсене ăспа илейместĕн. Чунпа пымалла вĕсем патне. Айхи уçăлсан та пултарать, уçăлмасан та пултарать. Айхине тарăннăн тĕпчес ĕçре пурнăç опычĕпе пĕлÿ кăна çителĕксĕр – чун опычĕ тата чун пĕлĕвĕ кирлĕ.

Тĕнче шайне çĕкленнĕ Айхи пирки Атнер Хусанкай нумай çырнă. Вĕçĕнче унăн шухăшĕсенчен хăшне-пĕрне илсе парам:

«Айхине тăванла туйма, унăн пултарăвне чун-чĕремĕрсене йышăнма эпир Европа хыççăн – сăвăçăмăр нумай тĕрлĕ çĕр-шывра ят илнĕ хыççăн – пуçларăмăр пулас, ку ĕнтĕ ĕмĕртен пыракан йăламăр: «Тăван Аттелĕхĕмĕрте Пихампар-йăхравçă пулаймастăн». Пире хавхалантаракан пĕр япала кăна пур: Чăвашра ун пек-и, кун пек-и – «айхилĕх» ялан чĕрĕ пулнă, халăх хушшинче ăна манман /е манма паман «сыхă» критиксем чăваш литературинче Айхи ятне тĕрлĕ контекстра асăнкаланă, «çĕтсе çÿренĕ ывăлăмăр пулсан та – хамăрăн» тенĕ пекрех/, Раççей сăмахлăхĕнче вара – халĕ те! – вăл «ют кайăк» е усрав ача вырăнĕнче кăна» /Геннадий Айхи. Пĕтĕм пурнăçшăн çĕкленнĕ музыка // «Хыпар» кĕнеки. Шупашкар, 1992, аван, 10, 3-4 с./.

«Пирĕн чăваш çыравçисенчен Европа шайĕнче ят илнĕ пĕртен пĕр çын – Айхи. Ун пекки художниксен хушшинче те çук-ха. /.../ Европăра Айхие вырăсла çырнă сăвăсем тăрăх çеç пĕлеççĕ, анчах та ăна чăваш тесе йышăнаççĕ. Жак Рубо – «Айхи, чăваш...», Виктор Ворошильский – «Хунсен ывăлĕ, хайхи». /.../ Айхи тĕслĕхĕ мĕн кăтартать-ха? Уйрăм поэтăн, аталанас тесессĕн, май çитнĕ таран тĕнче поэзийĕпе анлăрах та тарăнрах паллашмалла. /.../ Тĕнче культурипе паллашмалла ĕнтĕ унăн, хупăнса ларма юрамасть. /.../ Тĕнче культурипе паллаш, анчах хăвăн нацилĕхне упраса хăвар» /«Хыпар», 1994, çурла, 26, 3 с./.

«Унăн сасси Европăри, тĕнчери тĕрлĕ чĕлхепе янрать, Чăваш Сăмахĕ ăна пула аслă тĕнчере пур» /«Хыпар», 2001, ака, 11/.

■ **Юрий ЯКОВЛЕВ**

КИЛТЫ ХУÇАЛĂХ

● *Сан валли, пахчаçă*

Хурăн çырли калчисене лартма вăхăт

Çурла уйăхĕ – хурăн çырли калчисене лартмалли чи лайăх вăхăт. Çырла яланах пысăк тухăç патăр тесен кашни çулах кĕркунне хурăн çырли лаптăкĕн тăваттăмĕш пайне çĕнетмелле. Виçĕ çул çырлапа савăнтарнă, тĕмсене кăкласа çĕнĕ вырăнта калчасем лартмалла. Хурăн çырли лартмалли лаптăка çу-çĕртме уйăхĕсенче хатĕрлемен пулсан ăна васкавлă майпа хатĕрлемелле. Малтанах пĕчĕк юпасем лартса ретсен пуçламăшĕпе вĕçне паллă тăваççĕ. Ун хыççăн юпасенчен туртса çыхнă шпагат тăрăх чавнă канавсене /сарлакăшĕ 20-25 сантиметр, тарăнăшĕ 18-20 сантиметр/ минерал удобрени, çĕрнĕ тислĕк, йывăç кĕлĕ хураççĕ те канаври тăпрапа хутăштараççĕ. Çапла хатĕрленĕ тăпрана шăвараççĕ. Унта хурăн çырли калчисене лартаççĕ /ретсен хушши – 50-60 сантиметр, ретре калчасен хушши – 25-30 сантиметр/. Калчасене час-часах шăварсан вĕсем хăвăрт аталанаççĕ. Хурăн çырли калчисене хĕвел пĕçертмен, сулхăн кунсенче кăларса лартмалла.

● *Вулакан сĕнет*

Кĕл пулăшать

Эрнере пĕр хут эпĕ çÿçе кĕл шĕвекĕпе çăватăп. Вăл тĕсне кăштах улăштарать, çÿç палăрмаллах çирĕпленет.

Ирхине эпĕ çур литрлă кĕленче савăт, 2 апат кашăкĕ йывăç кĕлĕ илетĕп, 1 стакан ăшă шыв яратăп. Каçхине çак шыва сăрăхтарса уйрăм савăта яратăп. Çÿçе шĕвекпе йĕпететĕп, çÿç тымарне 3-5 минут сăтăратăп – кăштах чĕпĕтет. Ун хыççăн ăшă шывпа, кайран шампуньпе çăватăп.

Л.АНДРЕЕВА.
Канаш районĕ.

● *Ан сиенле*

Сăн ÿкерчĕке никамах та ан парăр

Хăвăрăн сăн ÿкерчĕксене упрăр, никамах та ан парăр /çывăх çынсемсĕр пуçне/. Сăн ÿкерчĕксемпе ыттисене ырă сунманнисем, çын вăй-халне туртса илекенсем, хура магсем час-часах усă кураççĕ.

Раççей ăсчахĕсем хăйне евĕрлĕ çакнашкал эксперимент ирттернĕ. Вĕсем икĕ кайăк чĕппине ÿкерсе илнĕ. Пĕри сып-сывах пулнă, тепри аталану енĕпе юлса пынă. Малтанхи кайăк ÿкерчĕкне пĕр ушкăна панă, вĕсем кашни кунах мĕскĕн çине пăхса ĕçре тата киленче пухăнакан ялăх туйăмĕсене ун çинелле янă. Иккĕмĕш ушкăн чирлĕ чĕп çине пĕрмаях хавхаланса, савăнса тинкернĕ. Тепĕр уйăхран пĕтĕмлетÿсем тунă. Сывă чĕп куç умĕнчех ялăхма тытăннă. Иккĕмĕш чĕппине лайăх энергетика çирĕпленме пулăшнă.

Кофе пĕçерме пĕлетпĕр-и?

● Кофĕне кĕленче савăтра типĕ вырăнта упрамалла.

● Пĕçернĕ чухне кофĕне юлашки самантра пĕр чĕптĕм тăвар хушмалла – çакă ăна ырă шăршăллă тăвать, хăйне евĕрлĕ тутă парать.

● Кофĕне вĕретме юрамасть – капла унăн чуна çĕклентерекен тути юлмасть те.

● Вĕреме кĕрекен кофĕне пĕр кашăк сивĕ шыв ярсан çиелти кăпăкĕ тÿрех анать.

● Тин авăртнă кофĕне пĕр чĕптĕм тăвар хушса ăшаласан вăл ырă шăршăллă пулать.

● Кофе пĕрчисен ырă шăрши çухалса пырать-и? Вĕсене 10 минут сивĕ шывра тытăр, ун хыççăн духовкăра типĕтĕр.

● Унччентерех авăртнă кофĕне халь çеç хатĕрленипе хутăштарма юрамасть.

● *Тутлă та, хаклах та мар*

Ÿпке-пĕвер таврашĕнчен хатĕрлетпĕр

Чăх чĕри açтăрхан мăйăрĕпе

Чăх чĕри 700 грамм, 1 стакан açтăрхан мăйăрĕ, 1 сухан, тутине кура тăварпа пăрăç, 2-шер апат кашăкĕ ÿсен-тăран çăвĕ тата услам çу кирлĕ.

Хулăн тĕплĕ çатмана ÿсен-тăран çăвĕ хушса вĕрилентермелле, чăх чĕрине хурса хупăпа хупласа вăйсăр çулăм çинче 10 минут пĕçермелле. Услам çăва ирĕлтерсе, кăштах шыв хушса çаврашкан каснă сухана пăшăхламалла, вĕтетнĕ açтăрхан мăйăрĕ хушмалла, тата 2 минут вăйсăр çулăм çинче тытмалла. Мăйăра чĕрепе хутăштармалла, 3-4 минут пăшăхласа илмелле.

«Кĕрĕк айĕнчи» пĕвер

500 грамм ĕне пĕверĕ, пĕçернĕ 2 çĕр улми, хытă йышши 100 грамм сыр, пĕçернĕ 1 кишĕр, пĕçернĕ 3 çăмарта, 250 грамм майонез, тутине кура тăвар кирлĕ.

Пĕвере тăвар хушнă шыва ярса пĕçермелле. Çĕр улмине, пĕвере, сыра, кишĕре шултра теркăпа хырмалла, салат савăтне сийĕн-сийĕн хурса тухмалла, çиелте – вĕтетнĕ çăмарта. Кашни сийне майонез кăштах сĕрмелле. Çиме пуçличчен сивĕтмĕшре 2 сехет тытмалла.

Гранатран – салат

500 грамм ĕне чĕри, 200 грамм сыр, çур гранат, пĕр ывăç açтăрхан мăйăрĕ, майонез кирлĕ.

Чĕрене пĕçермелле, тăваткăлласа турамалла. Сыра шултра теркăпа хырмалла, мăйăра вĕтетмелле, граната хуппинчен тасатмалла. Салата сийĕн-сийĕн хурса тухмалла: сыр, чĕре, гранат пĕрчисем тата мăйăр. Кашни сийне майонез сĕрмелле.

Пÿрепе кăмпа

1 килограмм ĕне-пăру пÿри, 200-шер грамм çерем кăмпипе /шампиньон/ сухан, çу хисепĕ 10 процентлă хăймаллă сĕт /сливки/ кирлĕ.

Кăмпана тăвар хушнă шывра пĕçермелле, турамалла. Сухана ÿсен-тăран çăвĕнче ăшаламалла, кăмпа хушмалла. Пĕçернĕ пÿре касăкĕсемпе хутăштармалла, хăймаллă сĕт ярса вăйсăр çулăм çинче 5-7 минут пăшăхламалла. Вĕçĕнче ыхра хушма юрать.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

Сăмах каçмăш

Владислав ПЛАТОНОВ /Шупашкар районĕ, Шоркка ялĕ/ хатĕрленĕ

СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Çар техники. 3. Дивизи йышĕнчи подразделени. 8. 1853 çулта Раççейпе Турци хушшинчи çапăçу пынă хула. 9. Карап çинчи васкавлă ĕç. 10. Бензин ... числи. 12. Салтак тем ...ĕпе чирлерĕ. 13. Бухгалтерире пĕтĕмпех йĕркеллĕ. 14. Салтакăн юратнă аш апачĕ. 15. 1378 çулта вырăссемпе тутарсем çак юхан шыв патĕнче çапăçнă. 17. Болт çине кĕрсе ларакан. 22. Авалхи пысăк катапульта. 23. Патша керменĕнчи хурал. 24. Шыври минăсене пухмалли хатĕр. 25. Айăпшăн тавăрни, айăплани.

АЯЛАЛЛА: 1. Ополчени йĕркеленĕвĕ. 2. ... технологи. 4. Германири юхан шыв. 5. Пăшал кĕпçин диаметрĕ. 6. Вăрттăн йĕркелекен агент. 7. Тăшман еннелле чавнă окоп. 10. Атăлçи çар ...ĕ. 11. Çак юхан шыв çинче Раççей тата Швеци çарĕсем çапăçнă. 14. Командование хыпарлани. 16. Çар подразделенийĕсен пысăк пĕрлешĕвĕ. 18. Паттăрла пуçне хунă салтаксем пирĕн ...н каймаççĕ. 19. Çапăçу йĕрки, стройĕ. 20. Кавалери стройĕ. 21. Çамрăк матрос.



Сăмах каçмăш хуравĕсем

СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Танк. 3. Полк. 8. Синоп. 9. Аврал. 10. Октябрь. 12. Амак. 13. Ажур. 14. Рагу. 15. Божа. 17. Гайка. 22. Онагр. 23. Рычага. 24. Траг. 25. Кара.

АЯЛАЛЛА: 1. Тысяча. 2. Ганно. 4. Одра. 5. Калиф. 6. Шлиц. 7. Сана. 10. Округ. 11. Нарва. 14. Рапорт. 16. Армада. 18. Асра. 19. Каре. 20. Лава. 21. Юнга.

Ха-ха-ха! Ахăлтатса кулар-ха!

Лагерь пуçлăхĕ режима час-часах пăсакан ристана хăйĕн патне чĕнсе илет:

– Юлашки хут асăрхаттаратăп: хăвна малашне те çапла йĕркесĕр тытсан апат вырăнне шывпа çăкăр çеç пама пуçлăнăр!

– Тавах! Мана пĕр уйăх шывпа кăна усраççĕ ĕнтĕ.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пÿлĕм
ПĔЛТЕРÚ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Козловского района информирует о предоставлении в аренду земельных участков из земель с/хозяйственного назначения сроком на 10 лет: для содержания и обслуживания водоема, расположенного в Еметкинском с/пос. с кадастровым номером 21:12:140101:694 площадью 30000 кв.м.; сроком на 3 года: для ведения сельскохозяйственного производства, расположенных в Солдыбаевском с/пос. с кадастровыми номерами: 21:12:060101:233 площадью 75001 кв.м., 21:12:060101:234 площадью 1099992 кв.м.

ПРОДАЮ

172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

518.Гравмассу, щебень, песок речной, карьерный; чернозем, глину. Д-ка. Т. 89520269954.

РАБОТА

572.Срочно требуется в Москву **бригада каменщиков** – з/п сдельная /2500 руб. – 1 куб. м./; **монолитчиков, кровельщиков.** Т.: 89037943017, 89056237555.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.И.СМИРНОВА

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Çç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÚСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ěç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 20.08.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7411. Заказ 3121.